Библ. им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
Март
9
ВЫРСАРНИКУН
№ 50 (8702)
Хакĕ 20 пус.
35-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

СССР Верховнăй Совечĕн ларăвĕсем. Национальноçсен Совечĕн тата Союз Совечĕн мартăн 7-мĕшĕнче пулнă ларăвĕсем çинчен Информациллĕ Пĕлтерӳ. Национальноçсен Советĕнче. Союз Советĕнче (1 стр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. Я. Васильев.—Харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене куллен пулăшмалла (2 стр.).

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕнче (2 стр.).

ЯЛХУÇАЛĂХĔНЧЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕН ОПЫЧĔПЕ ПАЛЛАШТАРАТПĂР. А. Кулаевский. — «Гвардеец» колхоз вăйлă тырпулшăн кĕрешет (2 стр.).

А. Иванов. — Чĕпсене пăхса ӳстересси çинчен (3 стр.).

А. Федоров.—Тутарстанри нефтяниксен ĕçри çитĕнӳвĕсем (3 стр.).

Я. Прокопьев. — Чăваш çамрăкĕсем Мускаври стройкăсенче (3 стр.).

Н. Молчанов.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Вăрçăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курассине хирĕç. Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕ ООН Генеральнăй секретарĕ патне янă çыру (4 стр.).

Вырăнти Советсен организациллĕ-массăллă ĕçне—паянхи задачăсен çӳллĕшне

Вырăнти Советсен вăйĕ—массăсемпе тачă çыхăнса ĕçленинче. Çакă вăл хуçалăхпа культура строительствинчи çитĕнӳсен тĕп никĕсĕ пулса тăрать. Ĕççыннисен ăнланулăхне ӳстересси, массăсен творчествăллă пултарулăхĕпе пуçарулăхĕ çине таянса ĕçлесси—вырăнти Советсен чысла тивĕçĕ.

Пирĕн республикăри вырăнти Советсем хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырас тĕлĕшпе пахха опыт пухрĕç. Республикăри чылай ял, поселок, хула тата район Совечĕсем хăйсен ĕçри пултарулăхĕпе хастарлăхне, ĕççыннисен массисем хушшинче ĕçлессине вăйлатрĕç. Советсен ĕçĕнче социализмлă ăмрту тĕп меслет, хăватлă вăй пулса тăрать. Çакна асра тытса, республикăри малта пыракан ял, поселок, хула, район Совечĕсем хăйсем умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлă пурнăçлассишĕн ăмăртса ĕçлессĕ, хăйсен ĕçне депутатсене, яланхи комиссисене, актива тăтăшах хутшăнтарассĕ, массăсем хушшинчи çыхăнăва куллен çирĕплетессĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ тата Чăвашоблпрофсовет 1951 çулхи IV-мĕш кварталти социализмлă ăмăртăвăн итогĕсем тăрăх Анат Туçа (Чкаловски районĕ), Стрелецки (Етĕрне районĕ), Иваньково-Ульяновски (Улатăр районĕ), Вăрманкас (Вăрнар районĕ), Мало-Карачкино (Сĕнтĕр районĕ) ял Совечĕсем мала тухнине палăртрĕç, вĕсене куçса çӳрекен хĕрлĕ ялав памалла турă. Çак ял Совечĕсем хуçалăхпа культура ыйтăвĕсене вăхăтра тивĕçтерессĕ, государство умĕнчи обязательствăсене чыслă пурнăçлассĕ. *Асăннă ял Совечĕсем, вĕсен яланхи комиссийĕсем, депутачĕсем хăйсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе ответлăха туйса ĕçлессĕ.*

Республикăри малта пыракан ял Совечĕсем суйлавçăсен наказĕсене пурнăçласа чылай çитĕнӳсем турĕ. Çакă вăл Советсем массăсем хушшинчи массăллă-ăнлантарулă ĕçе пултарулăхпа пынинчен, депутатсен ĕçри активлăхĕпе ответлăхĕ çӳлти вырăнта тăнинчен килнĕ. Кунта депутатсем хăйсен ĕçĕсем çинчен час-часах отчетсем туса парассĕ, ĕççыннисен критикăллă асăрхаттарăвĕсене шута илсе, çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерес тĕлĕшпе пĕтĕм вăя, пултарулăха хурса ĕçлессĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ ку ял Совечĕсене вĕрекен колхозсем хуçалăхпа организаци тĕлĕшĕнчен çирĕпленессĕ. Вĕсем пысăк тухăçлă тырпул туса илессĕ. Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхĕ ӳссе пырать, артель членĕсен культури кунсерен хăпарать.

Анчах республикăри хăшпĕр ял Совечĕсем организациллĕ-массăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ. Илĕпĕр Шупашкар районĕнчи Ильпеш ял Советне. Ял Совечĕ организациллĕ-массăллă ĕçе начар организациленĕ, депутатсене Совет ĕçне çителĕксĕр хутшăнтарнă. Çавна пула та ĕнтĕ ял Совечĕ хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене тивĕçлипе пурнăçламасть. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра иртнĕ çул тырпул тухăçлăхĕ начар пулнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тулгарасси япăх пулса пырать. Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе те çитменлĕхсем нумай. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз сураккине начар хатĕрленет. Ялхуçалăх машинисене юсасси япăх пырать, вăрлăхсене шăтмалли кондицие çитермен, вĕсене таса мар амбарсенче усраççĕ. Уй-хире юр тытса хăварас, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл хатĕрлес ĕç çине колхоз тата ял Совет руководителĕсем сӳрĕккĕн пăхаççĕ. Колхозра хĕллехи агротехникăллă мероприятисене ирттермеççе пĕрех. Район Совет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕнче ĕçлекен специалистсем колхозра сайра хутра çеç пулкалаççĕ. Райсовет исполкомĕ çак çитменлĕхсем çинчен пĕлет пулсан та, ял Советне организациллĕ-массăллă ĕçе йĕркелеме пулăшмасть, колхоз сураккине мĕнле хатĕрленинпе сахал интересленет, йышăннă решенисене пурнăçланине нумай вăхăт хушши тĕрĕслемест.

Хуçалăхпа культура ыйтăвĕсене сессисемпе ларусенче пăхса тухасси—вырăнти Советсен организациллĕ-массăллă ĕçĕн формисенчен пĕри пулса тăрать. Çакна палăртмалла: юлашки уйăхсенче хăшпĕр ял, поселок, хула тата район Совечĕсем сессисене Чăваш АССР Конституцийĕнче кăтартнă срoксенче ирттермеççĕ. Нумаях пулмасть Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Йĕпреç райсовет исполкомĕ сессисене мĕнле хатĕрленсе ирттерни çинчен райсовет исполкомĕн докладне итленĕ. Верховнăй Совет Президиумĕ сессисене ирттерес тĕлĕшпе исполком ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртрĕ. Иртнĕ çулта районти 17 ял Совечĕпе икĕ поселок Советĕнчен пĕр поселок Совечĕ кăна сессисене вăхăтра ирттернĕ. Районти Эйпеç, Тури Кĕлешкасси, Савкка ял Совечĕсем пурĕ те вискер сесси кăна ирттернĕ. Сессисене хатĕрленмесĕр ирттерессĕ, кун йĕркинче тăракан ыйтусене сӳтсе явнă чухне критикăпа самокритика çителĕксĕр. Ял Совечĕсем хуçалăхпа культура ыйтăвĕсене татса парас тĕлĕшпе актива сахал хутшăнтарнă. Организациллĕ-массăллă ĕçе администрациллĕ майпа, канцелярилле меслетсемпе туса пынине пула, асăннă ял Совечĕсем ĕççыннисен ыйтăвĕсене япăх тивĕçтерессĕ, массăсемпе çыхăну тытассине тивĕçлипе хакламаççĕ, хăйсем тавра актива пĕтĕçтерме тăрăшмаççĕ.

Вырăнти Советсен задачи—актива кунтан-кун ӳстерсе, ăна ĕçре вĕрентсе, тăтăшах пулăшса пырасси пулать. Массăсем хушшинче ĕçлесси, активистсене ĕçре çитĕнтересси, паллах ĕнтĕ, çăмăл ĕç мар. Кунта пысăк чăтăмлăх, большевикла принциплă, ĕçре пултарулă пулни, куллехи пурнăçра сĕннине, ĕçри пахха опыта малалла аталантарса пыма пĕлни кирлĕ. Çакă вăл вырăнти Советсен ĕçĕнчи ответлă задачăсенчен пĕри.

Вырăнти Совет руководителĕсен, власть органĕсенче ĕçлекен работниксен ĕçри пултарулăхĕ администраторла ĕçе политикăллă-воспитаниллĕ, организациллĕ-массăллă ĕçпе çыхăнтарса пыма пĕлнинчен килет. Вĕсен аслă Сталин Советсен вăйĕ массăпа тачă çыхăнса ĕçленинче, тесе вĕрентнине пĕр самантлăха та манмалла мар. Çакă вăл хуçалăхпа культура строительствинчи çитĕнӳсен никĕсĕ.

Вырăнти Советсене суйланă вăхăтра суйлавçăсем хăйсен депутачĕсене организациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе чылай пахха наказсем пачĕç. Çак наказсемпе сĕнӳсене пурнăçласси вырăнти Советсен куллехи тивĕçĕ. Критикăпа самокритикăна çӳлти пусăмра тытса, вырăнти Советсен хăйсен ĕçĕсенчи çитменлĕхсене çийĕнчех палăртса пĕтерессишĕн тăрăшмалла.

Вырăнти Советсем умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Республикăри колхозсем хальхи вăхăтра сураккине хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерессĕ. Советсен тивĕçĕ—çак ĕçсене большевикла тимлĕхпе ертсе пырасси, колхозниксемпе колхозницăсен ĕçри хастарлăхне тата та ытларах ӳстересси пулать.

Республикăри вăрман промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем тата колхозниксемпе колхозницăсем кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана ăнăçлă тултарма Сталин юлташ умĕнче социализмлă обязательствăсем пачĕç. Çак обязательствăсене чыслă пурнăçлама ĕççынни массисене куллен мобилизацилесси—вырăнти Советсен тĕп задачисенчен пĕри.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ республика промышленноçĕ, ялхуçалăхĕ тата культура строительстви умне кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама ĕççыннисене анлă мобилизацилесси—вырăнти Советсен организациллĕ-массăллă ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнмалла.

Комсомольски районĕ вăрман хатĕрлемелли плана тултарнă

КОМСОМОЛЬСКИ, мартăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Стахановла уйăхлăх хутшăнса, районти колхозниксемпе колхозницăсем йывăç касса хатĕрлемелли сезон планне 101,7 процент, каснă йывăça çул хĕррине илсе тухмалли плана 102,9 процент, турттарса кăлармалли плана 100,7 процент тултарчĕç.

Вăрман хатĕрлевĕнче «Красная звезда», Мичурин ячĕпе, Ульянов ячĕпе, Молотов ячĕпе, Калинин ячĕпе тăракан колхозсемпе «Дружба», «Гвардеец», «Хунав», «Ленинская победа», «Красное Сормово» колхозсен членĕсем стахановла ĕçлерĕç.

Плана тултарайман колхозсем хăйсен Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçне пурнăçлассишĕн вăрманта тăрăшса ĕçлессĕ.

ВКП(б) Комсомольски райком секретарĕ А. ГАВРИЛОВ.
Райсовет исполком председателĕ П. ОСИПОВ.

СССР Верховнăй Совечĕн ларăвĕсем

Национальноçсен Совечĕн 1952 çулхи мартăн 7-мĕшĕнчи ларăвĕ çинчен ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Мартăн 7-мĕшĕнче, ирхине 11 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысăк двoрецра, Национальноçсен Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ пулнă.

Лару председателĕ — Национальноçсен Совечĕн председателĕ **Ж. Шаяхметов** депутат.

Национальноçсен Совечĕ ларура Национальноçсен Совечĕн Бюджет комиссийĕн Председателĕ **И. С. Хохлов** депутат тунă содоклада итленĕ.

Бюджет комиссийĕн содоклачĕ хыççăн ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклад тăрăх прениссем пуçланнă.

Прениpe çак депутатсем тухса каланă: **Б. Н. Черноусов** депутат (РСФСР-ти Омск округĕ), **В. Т. Лацис** депутат (Латви ССР-ĕнчи Кировски округ), **П. А. Абрасимов** депутат (Белорус ССР-ĕнчи Мозырь хула округĕ), **Г. Ш. Каржаубаев** депутат (Казах ССР-ĕнчи Зайсан округĕ), **Г. Я. Рудь** депутат (Молдаван ССР-ĕнчи Дрокия округĕ), **О. В. Романова** депутат (Мари АССР-ĕнчи Морки округĕ), **Л. А. Иллиссон** депутат (Эстони ССР-ĕнчи Харьюски уезчĕн хĕвеланăç пайĕнчи округ), **Ф. Л. Доль** депутат (Украина ССР-ĕнчи Ровно округĕ) тата **Б. Л. Лобсанов** депутат (Бурят-Монгол АССР-ĕнчи Баргузин округĕ).

Çавăнпа Национальноçсен Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ хупăннă.

Национальноçсен Советĕнче

Мартăн 7-мĕшĕнче Кремльти двoрецĕн Пысăк залĕнче СССР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ хăйĕн ĕçĕсене малалла туса пынă.

Национальноçсен Совечĕн ларăвĕ 11 сехетре уçăлнă.

Председатель сĕтелĕ хушшинче—Национальноçсен Совечĕн председателĕ **Ж. Шаяхметов** депутат, председателĕн заместителĕсем **М. Т. Якубов, В. Т. Лацис, Т. И. Матиашвили** депутатсем.

Правительство ложисене **А. И. Микоян, Н. А. Булганин, А. Н. Косыгин, Н. М. Шверник** тата **М. Ф. Шкирятов** юлташсем тухаççĕ, вĕсене депутатсемпе хăнасем ăшшăн кĕтсе илеççĕ.

Содоклад тума Палатăн бюджет комиссийĕн Председательне **И. С. Хохлов** депутата сăмах параççĕ. Вăл ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне бюджет комиссийĕ кĕртнĕ тӳрлетӳсене шута илсе çирĕплетме ыйтать.

Бюджет комиссийĕн содоклачĕ хыççăн ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне сӳтсе явма тытăннă. Хăйсен сăмахĕсенче депутатсем, пĕр кăмăллă пулса, социализмлă государствăн производствине малалла аталантармалли, ĕççыннисен материаллă-культурăллă пурнăç условийĕсене лайăхлатмалли, пирĕн çĕршывăн оборона тĕрекне çирĕплетмелли бюджетне ырлаççĕ.

Б. Н. Черноусов депутат (РСФСР) Росси федерацийĕн пур облаçĕсенче те пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй хуçалăх строительстви, хуласемпе рабочи поселокĕсенчи благоустройство ĕçĕсем анлă туса ирттерни çинчен каласа парать. Иртнĕ çулта кăна республикăн хулисенче 17 миллион тăваткăл метр чухлĕ пурăнмалли çуртсем тунă.

Черноусов депутат республикăри ĕççыннисен пысăк гидроэлектростанцисемпе каналсем тăвас ĕçри задачисем çинчен калать. Малтанлăха шутланă тăрăх, РСФСР территорийĕнче 18 миллион гектар çĕр лаптăкне шăварма тата шыв парса тăма хатĕрлесе çитермелле. Çитес çывăх çулсенчех çĕршер хуласемпе ялсене, нумай предприятисемпе учрежденисене урăх çĕре куçармалла пулать.

В. Т. Лацис депутат Латви республикинчи ĕççыннисем тунă çитĕнӳсем çинчен каласа парать. Республикăра çĕнĕрен йывăр промышленность туса хунă, энергетика базине аталантарас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. 1951 çулăн итогĕсем Латви ССР-ĕн производительнăй вăйĕсем малалла ӳссе пыни çинчен калаççĕ. Промышленность продукцийĕ туса кăлармалли плана ирттерсе тултарнă. Ялхуçалăхĕ хăвăрт аталанса пырать. Латви халăхĕн культури ӳсет.

Лацис депутат ССР Союзĕн государство бюджетне çирĕплетме ыйтать.

П. А. Абрасимов депутат, ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне çирĕплетме сĕннине ырласа, Белорус ССР-ĕнчи халăх хуçалăхне ура çине тăратса, малалла аталантарса пыни çинчен цифрăсемпе фактсем илсе каласа парать. 1945 çулпа 1952 çул хушшинче республикăри промышленность валовой продукци туса кăларасси ултă хут ытла ӳснĕ. Энергетика тата строительство материалĕсем туса кăларасси ăнăçлă аталанса пырать, ялхуçалăхĕ чылай пысăк ӳсĕмсем тунă. Минск хулине тата ытти хуласене юсас, çĕнĕрен тăвас тата илемлетсе йĕркелес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ.

Г. Ш. Каржаубаев депутат (Казах ССР-ĕ) ССР Союзĕн государство бюджетĕнче коммунизм тăвакан совет çыннисен аслă ĕçĕсен программи палăрса тăни çинчен калать. Çакна Казахстан хăвăрт аталанса пыни те питĕ лайăх кăтартса парать.

Республикăн халăх хуçалăхне малалла аталантарса пымалли ĕçсем çинчен каласа, Каржаубаев депутат союзлă министерствăсем, сăмахран, тĕслĕ металлурги тата çĕр кăмрăк промышленность министерствисем хула строительствипе благоустройство ыйтăвĕсемпе сахал интересленнине палăртать.

— Совет Союзĕнчи тăванла халăхсен туслă çемйинче тет,— **Г. Я. Рудь** депутат,— молдаван халăхĕ çине тăрса ĕçлет, хăйĕн ĕçĕн результачĕсемпе савăнать. Совет Молдавин тĕслĕхĕнче, советлă ытти республикăсенчи пекех, ленинла-сталинла нации политикин, социализмлă нацисен *пĕртанлăхĕпе туслăх политикин* чаплă çĕнтерĕвĕ курăнса тăрать.

Советлă Молдави кĕске вăхăт хушшинче чечекленекен республика пулса тăчĕ. Молдаван ССР-ĕн промышленноçĕн тĕп çинчĕсем, вăрçăчченхи вăхăтпа танлаштарсан, тăватă хут ытла ӳснĕ.

Рудь депутат ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне, бюджет комиссийĕ сĕннĕ тӳрлетӳсене кĕртсе, çирĕплетме сĕнет.

Совет государствин пиççан икĕ... вăйĕпе тĕрекĕ ССР Союзĕн халăхĕсен туслăхĕнче пулса тăни çинчен **О. В. Романова** депутат (Мари АССР-ĕ) калать. Ĕлĕк кая юлнă мари халăхĕ, вырăс халăхĕ тата тăван çĕршывăн ытти халăхĕсем пулăшнипе, телейлĕ те савăнăçлă пурнăç çулĕ çине тухнă. Депутат мари хĕрарăмĕсем коммунизм строительстви ĕçне активлă хутшăнни çинчен каласа парать. Вырăнти Советсенче хĕрарăмсем 33 процент йышăнса тăраççĕ. Вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренекенсен хушшинче—çурри хĕрачасем. Хĕрарăмсем нумайăшĕ учительсем, врачсем, предприятисемпе колхозсенче ертсе пыракан работниксем пулса ĕçлессĕ.

Юлашкинчен Романова депутат Вăрман промышленность министерствин ĕçĕсене критикăлать.

Л. А. Иллиссон депутат (Эстони ССР-ĕ) коммунистсен партийĕпе Совет правительстви пулăшнипе Эстони халăхĕн пурнăçĕ лайăхланса пыни çинчен калать. Республика промышленноçĕ иртнĕ çулта планран ирттерсе электромоторсем, строительство материалĕсем, промышленноçпа апат-çимĕç таварĕсем нумай туса кăларнă. Ĕç тухăçлăхне ӳстермелли тата продукци хăйне ларакан хакне йӳнетмелли задачисене ирттерсе тултарнă. Обязательнăй пĕркерĕ пурне те çичĕ çул вĕрентмелли закон ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пырать, нумай çамрăксем вăтам тата аслă шкулсенче вĕренеççĕ.

— Эстони халăхĕ,— тет Иллиссон депутат,— пире куллен пулăшса пыракан совет халăхĕсен тăванла туслă çемйинче пуçман пулсан, çакăн пек пысăк ӳсĕмсем çинчен тĕллеме те пултарайман пулĕччĕ.

Ф. Л. Доль депутат Украинăн хĕвеланăç облаçĕсенчи ĕççыннисем телейлĕ пурнăç туни çинчен калать. Юлашки тăватă çул хушшинче Ровно облаçĕн бюджечĕ, сăмахран, пĕр хут çурă ытла ӳснĕ. Депутат промышленность производствин ӳсĕмне, ялхуçалăхĕн çитĕнĕвĕсене, ĕççыннисен материаллă-культурăллă пурнăç шайĕ ӳснине кăтартакан цифрăсем çинче чарăнса тăрать.

Б. Л. Лобсанов депутат Бурят-Монгол автономиллĕ республикин хуçалăхĕпе культури аталанса пыни çинчен калать. Кунта промышленноçăн паллă отраслисене тунă, пулă тытса консервăсем тумалли предприятисене хута янă, тискер кайăксем тытас ĕçе аплăн йĕркеленĕ. Ялхуçалăхĕн çĕнĕ культурисене: сахăр кăшманĕ, хĕвелçаврăнăш, кантăр т. ыт. те çитĕнтерессĕ. Бу культурăсене халиччен Байкал кӳллин лешĕ енче туса çитĕнтерме май килмен тесе шутланă. Бурят-Монгол республики пурте хут пĕлекенсен республики пулса тăнă.

Çакăн хыççăн Национальноçсен Совечĕн ларăвĕ хупăннă. (ТАСС).

Союз Совечĕн 1952 çулхи мартăн 7-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Мартăн 7-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысăк двoрецра, Союз Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ пулнă.

Лару председателĕ—Союз Совечĕн председателĕ **М. А. Яснов** депутат.

Союз Совечĕ çак ларура Союз Совечĕн Бюджет комиссийĕн Председателĕ **Л. Р. Корниец** тунă содоклада итленĕ.

Бюджет комиссийĕн содоклачĕ хыççăн ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклад тăрăх прениссем пуçланнă.

Прениpe çак депутатсем тухса каланă: **Д. С. Коротченко** депутат (Украина ССР-ĕнчи Амур-Нижнеднепровск округĕ), **И. В. Капитонов** депутат (Мускав облаçĕнчи Егорьевск округĕ), **З. Н. Чхубианишвили** депутат (Грузи ССР-ĕнчи Телави округĕ), **Ф. Р. Козлов** депутат (Ленинград хулинчи Октябрьски округ), **Л. Н. Ефремов** депутат (Куйбышев облаçĕнчи Сызрань округĕ), **А. Е. Клещев** депутат (Белорус ССР-ĕнчи Витебск округĕ), **А. П. Ефимов** депутат (Хабаровск крайĕнчи Хабаровск хули округĕ), **В. А. Амбарцумян** депутат (Армени ССР-ĕнчи Эчмиадзиван округĕ), **Я. П. Остров** депутат (Латви ССР-ĕнчи Кулдига округĕ), **К. К. Николаев** депутат (Свердловск облаçĕнчи Серов округĕ), **М. Ф. Тимашова** депутат (Воронеж облаçĕнчи Лиски округĕ).

Çакăнпа Союз Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ хупăннă.

Союз Советĕнче

Мартăн 7-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Кремльте Союз Совечĕн ларăвĕ пуçланнă.

Председатель сĕтелĕ хушшинче—Союз Совечĕн Председателĕ **М. А. Яснов** депутат, Союз Совечĕн Председатель заместителĕсем **А. И. Кириченко, Д. М. Зуева, А. И. Ниязов** депутатсем.

В. М. Молотов, Г. М. Маленков, Л. П. Берия, К. Е. Ворошилов, Л. М. Каганович, А. А. Андреев, Н. С. Хрущев, Н. М. Шверник, М. А. Суслов, П. К. Пономаренко *юлташсем правительство ложисене тухнине депутатсем тата хăнасем нумайчченех* тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Союз Совечĕн Бюджет комиссийĕн Председательне **Л. Р. Корниец** депутата сăмах параççĕ.

— Государство бюджечĕ,—тет **Л. Р. Корниец** депутат,—социализмлă экономикăпа культурăна малалла аталантарма, совет халăхĕн пурнăçне лайăхлатса пыма туса хатĕрленĕ. Бюджет комиссийĕ ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне халăх хуçалăхне план тăрăх малалла аталантарас интересcемпе килĕштерсе тунă тесе шутлать тата ăна СССР Министрĕсен Совечĕ пыщăннă суммăсене хăшпĕр тӳрлетӳсем кĕртсе çирĕплетме сĕнет.

Корниец депутат малалла промышленноçпа транспортра усă курман резервсем çинчен, вĕсем тупăшсене ӳстерме тата расходсене чакарма анлă майсем уçса пани çинчен калать.

Содоклад хыççăн Союз Совечĕ ССР Союзĕ 1952 çулхи государство бюджечĕн проектне сӳтсе явма тытăнать.

Депутатсем хăйсен сăмахĕсенче пирĕн çĕршывăн чаплă çĕнтерĕвĕсене çутатса тăракан тата советлă аслă Тăван çĕршыва малалла чечеклентерме май паракан çĕнĕ бюджетăн проектне пурте пĕр кăмăллăн ырлаççĕ.

Малтан **Д. С. Коротченко** депутат сăмах тухса каланă. Вăл Украина халăхĕн çитĕнĕвĕсем çинчен каласа панă. Республика промышленноçĕ çĕр кăмрăкĕ кăларас, чугун, хурçă, прокат туса кăларас енĕпе вăрçăчченхи шайран иртнĕ. Электроэнерги туса кăларасси, тракторсем, комбайнсем тата ытти кăткăс машинăсем туса кăларасси ӳснĕ.

Колхозсене пĕрлештерсе пысăклатнă хыççăн ĕçе организацилесси чылай лайăхланнă, механизмсемпе нумай тухăçлăрах усă кураççĕ. Выльăх-чĕрлĕхсен йышĕпе тухăçлăхĕ ӳссе пырать.

И. В. Капитонов депутат Мускав хулипе Мускав облаçĕн промышленноçĕ тата транспорчĕ пĕлтĕр çĕнĕ çитĕнӳсем туни çинчен калать.

Ĕççыннисен пурнăç условийĕсене пĕрмаях лайăхлатса пырассишĕн сталинла тăрăшни пурăнмалли çурт-йĕрсем тата культурăпа йăла учрежденийĕсем тăвасси ӳссе пынинчен уççăн курăнать. 1951 çулта Мускав хулипе Мускав облаçĕнче пурăнмалли çурт-йĕрсем 1.265 пин тăваткăл метр чухлĕ—1940 çулхинчен икĕ хута яхăн ытларах туса лартнă; 65 шкул, ача сачĕсемпе яслисем 96 тунă. Питĕ çӳлĕ те чаплă çуртсем столицăна илемлетсе тăраççĕ. Метрополитенăн 4 станциллĕ—çĕр айĕнчи двoрецсемлĕ çĕнĕ участокне туса пĕтернĕ.

Капитонов депутат ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне çирĕплетме сĕнет.

З. Н. Чхубианишвили депутат (Грузи ССР-ĕ) Совет Союзĕнчи халăхсем чăннипех пурте пĕртан пулни çинчен, тăванла килĕштерсе ĕçлени çинчен тата вĕсем пĕр-пĕрне пулăшса пыни çинчен, кашни халăх,—пысăк-и е вăл пĕчĕккĕ-и,—советлă Тăван çĕршывăн хуçалăхĕпе культурине çĕклес *тĕлĕшпе паха ĕçсем* туса пыни çинчен калать.

Ф. Р. Козлов депутат Ленинград хулинчи ĕççыннисем çĕнĕ çитĕнӳсем туни çинчен калать тата СССР Строительство материалĕсен промышленноçĕн министерствин ĕçĕ çинчен критикăллă асăрхаттарусем тăвать.

Куйбышев облаçĕнче пысăк улшăнусем пулса пыни çинчен **Л. Н. Ефремов** депутат каласа парать.

А. Е. Клещев депутат (Белорус ССР-ĕ) республика промышленноçĕ продукци туса кăларасси иртнĕ çулта 18 процент ӳсни çинчен; электромоторсем, металл касакан станоксем, автомобильсем, велосипедсем туса кăларасси тата ытти те ӳсни çинчен калать. Çакна тума малта пыракан опыта сарса пыни, наукăпа производство çыннисем творчествăллă çыхăнса ĕçлени нумай пулăшнă.

Клещев юлташ çавăнпа пĕрлех республика халăх хуçалăхĕн уйрăм отраслĕсенчи çитменлĕхĕсене кăтартса парать.

А. П. Ефимов депутат (Хабаровск крайĕ) хăйĕн сăмахĕнче Совет правительстви Инçет Хĕвелтухăçĕн хуçалăхĕпе культурине аталантарасси çине тимлĕн пăхнине палăртать.

Армян ССР Наука академийĕн президенчĕ **В. А. Амбарцумян** депутат республикăри ученăйсем халăх хуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен калать тата Аслă вĕренӳ министерствине Ереванри государство университечĕ çине çителĕксĕр пăхнăшăн критикăлать (университетăн çĕнĕ çуртне тума проект хатĕрленĕ, анчах Министерство ăна тума тытăнман).

Я. П. Остров депутат (Латви ССР-ĕ) республикăра питĕ пысăк улшăнусем пулса иртни çинчен каласа панă. Ĕлĕк буржуаллă Хĕвеланăçĕн ялхуçалăхлă хӳрешки пулнă Латви совет влаçĕн çулĕсенче вăйлă аталаннă промышленноçлă, малта пыракан ялхуçалăхлă республика пулса тăнă.

К. К. Николаев депутат (Свердловск облаçĕ) облаçри ĕççыннисем пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле коммунизмăн сталинла аслă стройкисене тăвас ĕçе активлă хутшăнни çинчен калать.

М. Ф. Тимашова депутат Воронеж облаçĕнчи ĕççыннисем мĕнле çитĕнӳсем туни çинчен тĕплĕн каласа парать. Вăл 1952 çулхи бюджета çирĕплетме сĕнет.

Çакăн хыççăн Союз Совечĕн ларăвĕ хупăнать. (ТАСС).

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе Шупашкарта пулнă чаплă пуху

Мартăн 8-мĕшĕнче Шупашкарти фабрикăсемпе заводсенчи стахановкăсем, орденсемпе медальсем илнĕ ача амăшĕсем, тава тивĕçлĕ учительницăсем, депутатсем, çавăн пекех партипе совет тата общественлă организацисен представителĕсем Советсен çуртĕн пысăк залне пухăнчĕç. Унта Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе чаплă пуху пулчĕ.

Пухура пулнисем, тăвăллăн алă çупса, хисеплĕ президиума Сталин юлташа, вăл ертсе пыракан ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Политбюро составне суйларĕç.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ çинчен Шупашкар хула Совет исполком председателĕн заместителĕ В. Сергеева юлташ доклад турĕ.

Докладчик совет хĕрарăмĕсен аслă прависем çинчен, хĕрарăмсем çĕршыври хуçалăхпа культура строительствинче хастарлă ĕçлени çинчен, пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем миршĕн, демократишĕн кĕрешни çинчен каларĕ.

Сергеева юлташ хăйĕн докладне Сталин юлташа саламласа каланипе вĕçлерĕ.

Пуху, пысăк çĕкленӳпе, аслă Сталин патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Юлашкинчен пысăк концерт пулчĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене кулленех пулăшмалла

Большевиксен партийĕн историйĕпе теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренни— марксизм-ленинизма алла илмелли тĕп меслет. Партире тăракан тата партире тăман большевиксем марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренесси султан-çул лайăхланса пырать. Коммунистсен партийĕ тата Сталин юлташ ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнипе пирĕн çĕршывра марксизм-ленинизма вĕренме лайăх условисем туса панă.

Пирĕн республикăри парти организацийĕсем коммунистсемпе партире тăман активăн политикăллă вĕренĕвне ертсе пырас тĕлĕшпе пысăк опыт пухрĕç. Вĕренекенсем пĕчченшерĕн е ушкăнпа консультацисене çӳреççĕ, вĕсемпе теориллĕ калаçусем ирттереççĕ.

Харпăр хăй тĕллĕн вĕренсе нумай коммунистсем хăйсен идейăллă-политикăллă пĕлĕвне ӳстерсе пыраççĕ. Сăмахран, Элĕк райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ Федотов юлташ яланах хăйĕн политикăллă пĕлĕвне ӳстерсе пырать. Вăл хăй валли вĕренӳ планĕ тунă. Планра Ленин—Сталин произведенийĕсене вĕренмелли сроксене, хушса вуламалли политикăллă тата илемлĕ литературăна кăтартнă, лекцисемпе консультацисене çӳреме палăртнă. Вăл час-часах консультантпа тĕл пулать, парти кабинетне çӳрет. План ăна вĕренӳре çирĕп йĕрке тума май панă. Çак вĕренӳ çуленче Федотов юлташ В. И. Ленинăн «Государство тата революци», «Совет влаçĕн черетри задачисем» ятлă произведенийĕсене вĕренсе конспект çырнă, халĕ Сталин юлташăн «Октябрьти революци тата вырăс коммунисчĕсен тактики» ятлă произведенине вĕренет.

Анчах политикăллă вĕренĕве йĕркелес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Партин хăшпĕр райкомĕсем, партин пуçламăш организацийĕсем марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренес ĕçе çителĕклĕ хак памаççĕ, хăйсен ĕçĕнче вĕсем кружоксене малти вырăна тăратаççĕ. Парти организацийĕсем коммунистсен вĕренĕвне кулленех тĕрĕслесе тăрассине, консультантсене тата марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене пулăшассине кирлĕ пек йĕркелемен. Çавна пула коммунистсенчен чылайăшĕ кулленех вĕренмест, вĕренӳ планĕсем туман е пачах вĕренме тытăнман. Сăмахран, Красноармейски районĕнче марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен 120 коммунистран çуррине яхăн хăйсен планне пурнăçа кĕртсе пымаççĕ, чылай консультантсем хăйсем çумне çирĕплетнĕ коммунистсемпе пĕр-икĕ хут çеç тĕл пулса калаçнă.

Харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене лекцисем пысăк пулăшу параççĕ. Лекциллĕ пропагандăна йĕркелес ĕçре хăшпĕр çитĕнӳсем тунă пулсан та, вăл марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсен ыйтăвĕсене пĕтĕмпех тивĕçтермест-ха. Партин чылай райкомĕсем çумĕнчи лекторсен ушкăнĕсем начар ĕçлеççĕ. Лекторсен пĕр пайĕ лекцисем тăвас ĕçе хутшăнмасть. Лекцисене пуринчен ытла парти кабинетĕнче кăна ирттереççĕ, партин пуçламăш организацийĕсенче квалификациллĕ лекцисем сайра пулаççĕ.

Хатĕрленĕ лекцисенчен нумайăшне лекторсен ушкăнĕнче сӳтсе явмаççĕ. Çав лекцисене хăш чух лекторсен ушкăнĕн руководителĕ те, пропагандăпа агитаци пайĕнче те пăхса тухмаççĕ. Çавна пула уйрăм лекторсем марксизм-ленинизм положенийĕсем çинчен кальки вăхăтпа тата коммунизм строительствин задачисемпе çыхăнтармасăр каласа параççĕ.

Марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене консультацисем пысăк пулăшу параççĕ. Парти организацийĕсем консультаци ирттерме теори енĕпе лайăх хатĕрленнĕ коммунистсене уйăрнă. Консультантсен хăйсем çумне çирĕплетнĕ коммунистсене яланах пулăшса, вĕсем мĕнле вĕреннине пĕрмаях тĕрĕслесе тămалла. Анчах çак ĕçе организацилессишĕн пĕтĕм ответлăха консультант çине йăвантармалла мар. Партин пуçламăш организацийĕ харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене çул кăтартса, тĕрĕслесе пыма тивĕç. Консультантăн парти организацийĕпе çыхăну тытмалла, вĕренӳ ĕçĕ çине сӳрĕк пăхакансем çинчен парти организацине пĕлтермелле.

Консультант ĕçĕн тĕп форми вăл—кашни вĕренекене уйрăм консультаци пани. Кашни вĕренекене уйрăм консультаци панă чухне, вăл ăнланман ыйтусене ăнлантарса пама, материала мĕнле ăнланнине пĕлме, коммуниста тивĕçлĕ пулăшу пама пулать. Консультант Александров юлташ (Ишлей районĕ) кашни вĕренекенпе уйрăм консультацисем ытларах ирттерет. Вăл коммунист хăй вĕренекен произведенин хăш сыпăкне вулани çинчен, ăна мĕнле ăнланни çинчен ыйтса пĕлет, унтан вĕренекенпе пĕрле унăн конспектне пăхса тухать; лайăх енĕсемпе çитменлĕхсене палăртать, юлашкинчен ытти темăсене мĕнле вĕренмелли çинчен каласа парать.

Пĕчченшер консультацисем ирттернипе пĕр вăхăтрах чылай консультантсем ушкăнлă консультацисем тата теориллĕ калаçусем ирттереççĕ. Ушкăнлă консультацисене темиçе коммунист пĕр произведенинех вĕреннĕ чухне, вĕсене пурне те пĕр пекрех ыйтусем интереслентернĕ чухне ирттереççĕ. Рефератсене е темăн тĕп ыйтăвĕсене теориллĕ калаçусенче сӳтсе яваççĕ. Ун пек чухне пăхса тухмалли ыйтусене тата кирлĕ литературăпа малтанах пĕлтерсе хураççĕ. Теориллĕ ыйтусене сӳтсе явсан, консультант итог туса парать. Ушкăнпа консультацисемпе теориллĕ калаçусем ирттернĕ чухне çакна та астăвас пулать: ку формăсемпе ытла нумай усă курни вĕренӳ пахалăхне начарлатма пултарать, харпăр хăй тĕллĕн вĕренес вырăнне, хăшпĕр юлташсем консультант çине кăна шанма пултараççĕ е ушкăнпа консультаци ирттерни кружок евĕрлĕ пулса кайма пултарать.

Хăшпĕр çĕрте харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене пĕр план тăрăх, пĕр календарлă срокра вĕренекен ушкăнсене пĕрлештереççĕ. Çав ушкăнсене, мĕн чухлĕ вĕреннине шута илмесĕрех, харпăр хăй тĕллĕн вĕренме кăмăлланă коммунистсене пурне те тенĕ пекех кĕртеççĕ. Çавăн пек туни кашни вĕренекене уйрăм ĕçлемелли йĕркене пăсать.

Хăйсем çумне çирĕплетнĕ юлташсемпе ĕçлемен консультантсем те сахал мар-ха. Парти организацийĕсем вĕсен ĕçне час-часах тĕрĕслемеççĕ. Политшкулсемпе кружоксенчи пропагандистсен ĕçне шута илмелли журнал пур, вĕсем занятисем ирттерни çинчен райкома хула комитетне пĕлтерсе тăраççĕ. Çав вăхăтрах консультантсен [illegible] нумайăшне ĕçне шута илмеççĕ. Парти комитечĕсем вĕсен ĕççне сахал интересленеççĕ.

Парти организацийĕсем консультантсен ĕçне мĕн чухлĕ лайăхрах ертсе пыраççĕ, вĕсен теориллĕ пĕлĕвне ӳстерессишĕн мĕн чухлĕ ытларах тăрăшаççĕ, консультантсен ĕçĕ те çавăн чухлĕ усăллăрах пулса пырать. Анчах ВКП(б) Йĕпреç, Куславкка райкомĕсем консультантсемпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Чылай районсенче консультантсене пĕр-ик хут канашлăва пухнă та, вĕсемпе ĕçлеме пăрахнă. Консультантсен семинарĕсен ĕçне те кирлĕ пек йĕркелемен. Консультантсене методика тĕлĕшпе пулăшассине вăйлатас пулать.

Парти пухăвĕсенче, ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен бюровĕсен ларăвĕсенче харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсен ĕçне [illegible] марксизм-ленинизм теорине вĕренекенсемпе час-часах калаçусем ирттерни вĕренĕве нумай пăхăхлатма пулăшать. Анчах партин ертсе пыракан органĕсем тата вĕсен ответлă работникĕсем çав формăсемпе çителĕксĕр усă курмаççĕ-ха.

Лекторсемпе консультантсене тата харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене парти кабинечĕсем пулăшу пама тивĕçлĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен парти кабинечĕсенче марксистла-ленинла литература, хаçат-журналсем, справочниксем, наглядлă пособисем пур. Парти кабинечĕсем лекцисем, консультацисем ирттереççĕ, харпăр хăй тĕллĕн вĕренес ĕç опычĕпе сараççĕ. Парти кабинечĕсен лекци, консультаци тата справкăпа библиографи ĕçне лайăхрах организацилемелле, лекторсен, консультантсен, харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен коммунистсен опычĕпе вĕренсе тĕпчемелле.

Уйрăмах харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен ялти актива ытларах пулăшу памалла. Радио тăрăх паракан лекцисене пĕччен тата ушкăнпа итлес ĕçе организацилемелле.

Харпăр хăй тĕллĕн вĕренес ĕçе ертсе пыни парти организацийĕсен пурнăçĕнче пысăк вырăн тытмалла. Вĕсем марксизм-ленинизма харпăр хăй тĕллĕн ăнăçлă вĕренме мĕн кирлине, çавсене пурне те туса памалла. Кунта пĕрех коммунистсен ответлăхне те ӳстерес пулать.

Уйрăмах консультантсен ĕçне тата лекциллĕ пропагандăна лайăх йĕркелени кирлĕ. Парти историйĕпе теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсемпе кашнинех уйрăм ĕçлесен кăна вĕренӳ пахалăхне çӳлĕ пусăма çĕклеме пулать

Я. ВАСИЛЬЕВ.

Пропагандистсен районти канашлăвĕ

ВКП(б) Елчĕк райкомĕ комсомол пропагандисчĕсен районти канашлăвне ирттерчĕ. Канашлура комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен политикăллă вĕренĕвне лайăхлатмалли майсем çинчен ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ П. Миронов юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик, çавăн пекех пренире тухса калакансем, районти хăшпĕр колхозсенче çамрăксене воспитани парасси лайăхланнине, çавна май колхоз производствинче малта пыракан çамрăксене комсомола илесси вăйланнине палăртрĕç. Вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа «Вперед» колхозри ВЛКСМ организацийĕ 11 çамрăка, Ленин ячĕпе тăракан колхозра—8 çамрăка, «Красное знамя» колхозра—6 çамрăка комсомол ретне илнĕ.

Канашлура чылай пропагандистсем хăйсен опычĕпе паллаштарчĕç. Занятисене ирттерме мĕнле хатĕрленни çинчен Сазонов юлташ, наглядлă пособисемпе тата илемлĕ литература произведенийĕсемпе усă курни çинчен Скворцов юлташ, теориллĕ калаçусем ирттерес ĕçĕн методики çинчен Петрянкин юлташ каласа пачĕç.

1951—1952 ÇУЛСЕНЧИ КЕРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА «ЧĂВАШВĂРМАН» ТРЕСТ ЕНĔПЕ 1952 ÇУЛХИ МАРТĂН 5-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Касса хатĕрленĕ	Çул хĕррине илсе тухнă	Турттарса кăларнă
Улатăр	81,9	85,3	65,0
Элĕк	79,4	73,9	56,0
Вăрнар	90,3	74,7	87,8
Йĕпреç	92,9	86,6	54,4
Ишлей	61,9	—	36,0
Калинино	89,8	71,7	90,2
Канаш	87,1	86,0	80,9
Комсомольски	99,4	102,9	97,0
Куславкка	88,0	96,7	85,8
Красноармейски	68,8	32,2	62,5
Хĕрлĕ Чутай	91,5	75,7	—
Кувакино	69,0	84,6	43,8
Сĕнтĕрвăрри	76,2	70,3	46,0
Муркаш	108,0	110,2	—
Октябрьски	61,1	87,2	73,7
Первомайски	87,2	75,7	84,0
Пăрачкав	95,2	102,4	101,5
Советски	67,0	—	70,7
Сĕнтĕр	100,3	39,5	85,1
Вăрмар	65,9	95,1	36,8
Çĕрпӳ	70,1	83,8	65,1
Шупашкар	93,3	98,5	47,9
Чкаловски	103,3	98,0	87,8
Чурачăк	83,5	77,5	48,8
Шăмăршă	77,5	68,2	74,1
Шăхасан	83,1	91,5	54,6
Çĕмĕрле	115,1	102,2	100,0
Етĕрне	78,6	105,4	61,6
Елчĕк	47,7	80,2	63,1
Тăвай	66,3	110,3	58,5

Сменăри нормăна срокчен тултараççĕ

Çĕмĕрлери «Комбайнлеталь» завод коллективĕ Канашри вагонсем юсакан заводри стахановец-тимĕрçĕсемпе электросварщиксем сменăри задание 7 сехетре е хăвăртрах та тултарассишĕн социализмлă ăмăрту пуçарнине завод коллективĕ тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Нумай рабочисем сменăри нормăна срокчен тултарма, смена вĕçлениччен вара плантан ирттерсе продукци туса кăларма сăмах пачĕç. Çавăн хыççăн заводра социализмлă ăмăрту çĕнĕ хăватпа вăйланса кайрĕ. Елфутин юлташ ертсе пыракан сборщиксен бригади сменăри нормăна 6 сехет те 45 минутра, Бурочкин юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен бригади — 6 сехет те 50 минутра тултарса пырать. Плотникова юлташ ертсе пыракан малярсен бригади кусса çӳрекен мастерской пилĕк кун вырăнне тăватă кунта сăрлакан пулчĕ.

Заводра материалсем перекетлессишĕн те ăмăрту вăйлă пырать. Рационализаторсем сĕннипе, кусса çӳрекен мастерскойсене витмелли шуç тимĕре 12 процент перекетлеççĕ Урăхла каласан, кашни саккăрмĕш мастерской перекетленĕ тимĕрпе витĕççĕ. Татур юлташ панă рационализаторла сĕнĕве пурнăçа кĕртни пĕр йышши детальсем туса хатĕрленĕ çĕрте метала 50 процент таран перекетлеме май парать.

Нумаях пулмасть завод коллективĕ автомашинăсен кузовĕсене поток меслечĕпе пухма тытăнчĕ Иртнĕ çулсенче болтсемпе гайкăсене алă вĕççĕн тăватчĕç, халĕ вĕсене штамплаççĕ. Технологин çĕнĕ меслечĕсемпе усă курни, рабочисен, инженерсемпе техниксен пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ кунтан-кун ӳссе пыни завода январь уйăхĕн планне ирттерсе тултарма май пачĕ.

Завод февраль уйăхĕнчи плана хăшпĕр изделисем тăрăх февралĕн 22-мĕшĕ тĕлне тултарнă. Халĕ завод коллективĕ СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе производствăри çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн кĕрешет.

Т. ЕРОПЛАН,
Заводăн техника пайĕн начальникĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕнче

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн ларăвĕ пулса иртрĕ. Ларăва А. Н. Митьков юлташ председатель пулса ертсе пычĕ. Президиум Йĕпреç район Совет исполкомĕ сессисене мĕнле хатĕрленсе ирттерни çинчен исполком председателĕн П. В. Васильков юлташăн докладне итлерĕ.

Йĕпреç райсовет исполкомĕ ял, поселок Совечĕсен сессийĕсене мĕнле ирттернине çителĕксĕр тĕрĕслет. Çавна пула та ĕнтĕ 1951 çулта районти 17 ял Совечĕпе 2 поселок Советĕнчен Йĕпреç поселок Совечĕ кăна сессисене Чăваш АССР Конституцийĕнче кăтартнă сроксенче ирттернĕ.

Эйпеç, Пысăк Упакасси, Тури Кĕлешкасси, Пучинке, Савкка, Чăваш Тимеш ял Совет исполкомĕсем иртнĕ çулта 3—4 сесси кăна ирттернĕ. Çапла вара Чăваш АССР Конституцин 57-мĕш статьине пурнăçламан.

Хăшпĕр ял Совечĕсем сессисене тивĕçлипе хатĕрленмесĕр ирттереççĕ. Кун йĕркинче лартнă ыйтусем çинчен депутатсене вăхăтра пĕлтермеççĕ Чăваш Тимеш ял Советĕнче вара сесси пулас кун çеç ун çинчен депутатсене пĕлтереççĕ. Çавна пула та ĕнтĕ сессисенче критикăпа самокритика çителĕксĕр. Пренисенче депутатсенчен ытларах сессине чĕннĕ ытти çынсем тухса калаççĕ. Пысăк Упакасси ял Совечĕн çиччĕмĕш сессийĕнче пĕр депутат та прение тухса каламан. Йĕпреç поселок Совечĕн вуннăрмĕш сессийĕнче 28 депутатран пĕр депутат çеç тухса каланă.

Пысăк Упакасси ял Совечĕпе Буински поселок Совечĕ финанспа бюджет ыйтăвĕсене пăхса тухнипе çеç лăпланса ларнă.

Райсовет исполкомĕ Советсен яланхи комиссийĕсен ĕçĕсем çине сӳрĕккĕн пăхать. 1951 çулта план тăрăх комиссисен председателĕсене пухса икĕ семинар ирттермелле пулнă, анчах вĕсене ирттермен. Район Совечĕн çичĕ комиссийĕнчен иккĕшĕ кăна (бюджетпа ялхуçалăх комиссийĕсем) ĕçлеççĕ.

Юлашки икĕ çул хушшинче райсовет исполкомĕ хăйĕн ĕçĕсем çинчен район Совет сессийĕнче пĕрре те отчетсем туса паман.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Йĕпреç райсовет исполком председательне П. В. Васильков юлташа Советсен сессийĕсене вăхăтра ирттерме, Чăваш АССР Конституцийĕн 56-мĕшпе 57-мĕш статьисене çирĕп пурнăçласа пыма хушса хăварчĕ. Райсовет сессийĕсенче хуçалăхпа культура ыйтăвĕсене тăтăшах сӳтсе явасси çинчен асăрхаттарчĕ.

Президиум çавăн пекех исполком çинчи яланхи комиссисене ертсе пырассине, вĕсене ĕçре практикăллă пулăшу парассине йĕркелеме тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушса хăварчĕ.

Президиум ларăвĕнче иккĕмĕш ыйтупа ĕçхалăх депутачĕсен Ишлей район Совет исполкомĕ ĕçхалăхĕсен ыйтăвĕсене мĕнле тивĕçтерни çинчен райсовет исполком председателĕн Е. И. Одинцов юлташăн докладне итлерĕ.

Ĕçхалăх депутачĕсен Ишлей район Совечĕн исполкомĕ ĕçхалăхĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Ĕçхалăхĕсен ыйтăвĕсемпе жалобисене учета илмен, вĕсене исполком председателĕ е унăн заместителĕ пăхса тухас кун çеç регистрацилеççĕ, йышăннă решенисем çинчен ыйтусем паракансене вăхăтра пĕлтермеççĕ. Исполком председателĕпе унăн заместителĕ тата исполком пайĕсен заведующийĕсем ыйтусемпе пыракан çынсене хăш кун, миçе сехетре йышăнни çинчен пĕлтерни çук.

Райсовет исполкомĕ ĕçхалăхĕсен ыйтăвĕсемпе жалобисене исполком пайĕсенче мĕнле тивĕçтернине сахал тĕрĕслет. Çулпĕр, культурăпа сутĕç пайĕсенче, ЦСУ инспектуринче, кинофикаципе суту-илӳ пайĕсенче, райпотребсоюзра, Ишлей ялповĕнче, Заготлен кантурĕнче, МТС-ра, çу заводĕнче ыйтусене пăхса тухас ĕçе йĕркелемен.

Ĕçхалăхĕсен ыйтăвĕсемпе жалобисене татса парас тĕлĕшпе нумай çитменлĕхсем пурри Ишлей райсовет исполкомĕ çак ыйтусене вăхăтра пăхса тухманнинчен килчĕ.

Президиум Ишлей райсовет исполкомĕн председательне Е. И. Одинцов юлташа ĕçхалăхĕсен ыйтăвĕсене татса парассине районта хакламаннине асăрхаттарчĕ, ку тĕлĕшпе палăрнă çитменлĕхсене пĕтерме хушса хăварчĕ.

Президиум райсовет исполкомне хăйĕн пайĕсенче, районти учрежденисемпе организацисенче ĕçхалăхĕсен ыйтăвĕсемпе жалобисене пăхса тухас ĕç мĕнле пулса пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăма, çак ыйтăва исполком ларăвĕсенче сӳтсе явма хушса хăварчĕ Çавăн пекех исполкомпа унăн пайĕсенче, районти учрежденисемпе организацисенче граждансене йышăнассине лайăхлатма, исполком председателĕпе унăн заместителĕ тата райсовет исполком членĕсем ыйтусемпе килнĕ çынсене хăш кун, миçе сехетре йышăнассине палăртса хума, çак ĕçе йĕркелеме тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушса хăварчĕ.

* * *

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ йышăннă Указсем тăрăх: Комсомольски районĕнчи Комсомольски ял Советĕнче пулнă Кĕçĕн Каçал ялне Этткер ял Советне кĕртнĕ Муркаш районĕнчи Атапай ял Советĕнче пулнă Хуракасси ялне Кашмаш ял Советне. Муркаш районĕнчи Очăкасси ял Советĕнче пулнă Çĕнъял Очăкасси ялне Çатракасси ял Советне, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ольтикасси ял Советĕнче пулнă Тенеккасси ялне Шуркасси ял Советне. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Анаткасси ял Советĕнче пулнă Тосинкасси ялне Анатри Макаç ял Советне, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шульгин ял Советĕнче пулнă Шульгин ялне Кушник ял Советне кĕртнĕ.

Шульгин ялне Кушник ял Советне кĕртнĕ май, Шульгин ял Совечĕ вырăнне Ураково ял Совечĕ тунă.

Ял Совечĕ колхоз çуракине хатĕрленнине тĕрĕслет

КУСЛАВККА. Январь уйăхĕнче Туканаш ял Совечĕн яланхи ялхуçалăх комиссийĕ Молотов ячĕпе тăракан колхоз çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухрĕ. Комисси колхозра хĕллехи агротехникăллă ĕçсене япăх пурнăçласа пынине палăртрĕ. Ял Совет исполкомĕ çак ыйтăва хăйĕн ларăвĕнче сӳтсе яврĕ, колхоз председательне Юршкина юлташа çуракине хатĕрленес ĕçе лайăхлатма, уйрăмах вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕçе вăйлатма, торф кăларассине организацилеме хушса хăварчĕ.

Ял Совет депутачĕсемпе активистсем çак решение пурнăçлама активлă ĕçе хутшăнчĕç. Решение мĕнле пурнăçласа пынине ял Совет исполкомĕ кулленех тĕрĕслесе тăчĕ.

Ял Советĕнче çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пынине сӳтсе явнă май, ял Совет сессийĕ Молотов ячĕпе тăракан колхоз хăшпĕр çитĕнӳсем тунине палăртрĕ Колхоз юр тытса хăвармалли плана ирттерсе тултарнă, ялхуçалăх машинисене юсас, вăрлăх сортлас ĕçе лайăхлатнă Вырăнти удобренисем кăларнă. **К. КОЧЕТОВ.**

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕпе паллаштаратпăр

„Гвардеец“ колхоз вăйлă тырпулшăн кĕрешет

Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозри уй-хир бригадисем пĕлтĕр пĕр-пĕрин хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ячĕç. Серĕсенче агрономи науки вĕрентĕвне анлăн пурнăçласа пычĕç. Çакă иртнĕ ялхуçалăх çулне паха çитĕнӳсемпе вĕçлеме май пачĕ. Колхоз 200 гектар çинчен вăтам шутпа кашни гектар пуçне 22 центнер ытла ыраш, 150 гектар çинчен кашни гектар пуçне 19 центнер ытла сурхи тулă пухса илчĕ. План тăрăх мĕнпур 594 гектар çинчен вăтам шутпа 15 центнер çурă тĕштырă пухса илме палăртнă пулсан, «Гвардеец» колхоз 18 центнер çурă илчĕ.

Кунта 1949 çулхи çуркунне тырпул туса илмелли вунă уйлă. выльăх апачĕ туса илмелли саккăр уйлă пуçă çаврăнăшĕ тунă. Пуçă çаврăнăшĕсенчи уйсенче нумай çул ӳсекен курăксем планпа палăртнă чухлĕ акса пыраççĕ Нумай çул ӳсекен курăксем тăпрана кĕрпеклентерме лайăх пулăшнине колхозниксем ĕçре курса ĕненчĕç. Вĕсем сурхи тулă, кантăр тата ытти паха культурăсене яланах нумай çул ӳсекен курăксем пулнă вырăна, кĕрхи тырăсене таса çĕртме тунă участоксем çине акаççĕ.

Тăпра кĕрпеклĕ тата унта ӳсентăрансене кирлĕ апатпа нӳрĕ çителĕклĕ пулни вăйлă тырпул çитĕнтермелли чи кирлĕ условин пулса тăрать. Çавăнпа та артель членĕсем уй-хире çулленех тислĕк нумай тăкаççĕ, юр тытас ĕçе тĕплĕ туса ирттереççĕ, тăпран сухаламалли сийне пĕрмаях тарăнлатса пыраççĕ. МТС трактор бригади (бригадирĕ коммунист Михайлов юлташ) çĕрĕç культурине ӳстерес тĕлĕшпе колхозри уй-хир бригадисемпе таччăн çыхăнса ĕçлет.

Колхозниксем уй-хире тăкмалли тислĕке малтан пысăк купасенче çĕртеççĕ. Тислĕке пĕр тан салатас шутпа сухаламалли çĕр лаптăкне кашни гектара çĕр кăткăна пайлаççĕ, кашни клетка пуçне пĕр лав тислĕк тăкса салатаççĕ Тислĕке салатса тухнă пулсан, çав участока сухаламасăр тепĕр куна хăвармаççĕ. Çакна трактористсем те асăрхаса тăраççĕ. вĕсем тепĕр кун тин сухаламалли участок çинче тислĕк салаттармаççĕ.

Пĕлтĕр пысăк тухăçлă ыраш пухса илнĕ çĕр лаптăкĕ çинче 1950 çулхи майăн пĕррĕмĕш çур уйăхĕнче таса çĕртме тунă Таса çĕртме тунă участоксене трактористсем предплужниклă плугсемпе 25—26 сантиметр тарăнăш сухаланă. Çĕртме пуссинче çумкурăксем шăтса тухма пуçласан, ăна трактор культиваторĕсемпе малтанхи хут 10—12 сантиметр тарăнăш, суха кассисене урлă культиваци тунă. Иккĕмĕш хут лаппăллă культиваторсемпе суха кассисене тăрăх 8—10 сантиметр тарăнăш, виççĕмĕш хут çав культиваторсемпех 6—7 сантиметр тарăнăш культиваци тунă.

Кĕрхи тырăсем акмă пуçличчен пĕр уйăх малтан таса çĕртме пуссине иккĕмĕш хут сухаланă, акас умĕн тата тепĕр хут культиваци тунă Культиваци тунă чухне кашниччех, трактор культиваторĕсем хыçĕнчен сӳресем кăкарса, çĕртме уйне сӳрелесе пынă. Çавна пула суха кассисене тикĕсленĕ, тăпрари нӳрĕ тинĕççĕн чакнă. Таса çĕртме пуссинче çумкурăксене ӳсме паман, шăтса тухма пуçласанах вĕсене культиваци туса пĕтерсе тăкнă.

Вăйлă тырпул туса илес ĕçре вăрлăх паха пулни тата ăна акас умĕн лайăх хатĕрлени пысăк вырăн йышăнса тăнине халĕ пурте пĕлеççĕ. «Гвардеец» колхозра кунта тухăçлă пулакан сортсен вăрлăхĕсене акаççĕ Юлашки виçĕ çул хушшинче ялан «Казанская 5+6» сортлă ыраш акаççĕ Акас умĕн вăрлăха лайăх тасатса пĕррĕмĕш класлă стандарта çитернĕ. Ыраша лисклă сеялкăсемпе августăн 10-мĕшĕпе 19-мĕшĕ хушшинче акнă. Çĕр гектар çине хĕреслĕ майпа, кашни гектар çине 200-шер килограмм вăрлăх, ытти участоксенче — ретлĕ майпа 170-шер килограмм акнă. Вăрлăха нӳрĕ тăпра ăшне 6—7 сантиметр тарăнăшне акса пынă.

Вăйлă тырпул ăстисен опычĕ кăтартса панă тăрăх, кĕрхи тырăсене кĕркунне фосфорлă-калиллĕ удобренисемпе апат пани хĕллехи сивĕсене тӳссе ирттерме пулăшать. Çакна шута илсе, «Гвардеец» колхоз членĕсем ыраш калчисене кĕркунне кашни гектар пуçне 1.2 центнер хлорлă кали сапса апат панă Хĕлле пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çинче юр тытса юлнă.

Кĕрхи тыра калчисене çуркунне азотлă удобренисем ытларах кирлĕ. Çавăнпа та артель членĕсем çуркунне юр ирĕлсе пĕтнĕ-пĕтменех ыраш калчине азотлă удобренисемпе апат параççĕ.

Çуркунне ыраш калчисене кашни гектар пуçне 1.3 центнер аммони сульфачĕ сапса апат панă Удобрение лайăх вĕтетсе сапнă тăпра типме пуçласанах калчисене пывăр сӳресемпе сӳрелесе тухнă.

Ыраш кĕпçеленме пуçланă вăхăтра унăн пулас пучахĕсем тĕвĕленме тытăнаççĕ. Çак вăхăтра калчасем тăпрари апата уйрăмах нумай илеççĕ. Çавăнпа та вĕсене çуркунне иккĕмĕш хут апат пани тырпул тухăçлăхне ӳстерме нумай пулăшать. «Гвардеец» колхозра пĕлтĕр малтанхи хут апат панă хыççăн икĕ эрне иртсен, кашни гектар пуçне 1,8 центнер суперфосфат сапса, иккĕмĕш хут апат панă.

Пучахра пĕрчĕсĕр пуçă вырăнсем ан юлччăр тесе, колхозниксем ыраша виçĕ хутчен искусственнăй майпа шăркалантарса тухнă Тырпул тухăçлăхне ӳстерме çакă та нумай пулăшнă.

Уй-хир бригадисем ыраша пулса çитсенех пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ. Кĕссе вăхăтрах çапса тирпейленĕ. Колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 22 центнер ытла ыраш пухса илнĕ пулсан, И Кузнецов юлташ бригади 52 гектар çинчен 24-шар центнер çурă туса илнĕ.

Колхозра сурхи тырăсем акмалли çĕре çулленех лайăх кăпкалатса, вырăнти удобренисемпе çемçетсе хатĕрлеççĕ Юлашки çулсенче сурхи культурăсене пурне те кĕрхи çĕртме тунă участоксем çине çеç акаççĕ 1951 çулта кĕрхи çĕртме тумасăр акни пĕр гектар та пулман. 1950 çулта 65 гектар çинче хăмăл сухаланă. Хăмăл сухаланă участоксем çинче сĕлĕ тухăçлăхĕ 15 процент ытларах пулнă.

Кĕрхи çĕртме сухине августра тата сентябрь пуçламăшĕнче тунă Пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çинче 22—24 сантимер тарăнăш, 90 гектар çинче 25—29 сантиметр тарăнăш сухаланă Сурхи тулă акмалли участоксем çине кĕрхи çĕртме тăвас умĕн кашни гектар пуçне 30-шар центнер тислĕк тăкнă.

Çуркунне тăпрари нӳрĕке сыхласа хăварас тесе, кĕрхи çĕртме тунă çĕре касă сийĕсем типме пуçласанах сӳрелесе тухнă. 1950—1951 çулсенче чылай участоксене тимĕр пăтаран тунă шлейфсемпе кăпкалатнă, çакă сӳрепе сӳреленинчен лайăхрах результатсем панă.

Сурхи тырăсен вăрлăхĕсене пурне те лайăх тасатса хатĕрленĕ, химикатсемпе имçамланă тата акас умĕн яровизациленĕ. Сурхи тулла пĕлтĕр 150 гектар çине апрелĕн 8—12-мĕшĕсенче пĕтĕмпех хĕреслĕ майпа акнă. Хĕреслĕ майпа акни тăпрари апатсемпе лайăхрах усă курма, çавна пула тырпул тухăçлăхне ытларах ӳстерме май парать Кунсăр пуçне тулă участокĕсем çине вăрлăхпа пĕрле кашни гектар пуçне пĕрер центнер вĕтетнĕ суперфосфат акнă. Вĕтетнĕ суперфосфата вăрлăхпа пĕрле тăпра айне туса пырсан, шăтса тухакан калчасем валли тымарсем сывăхĕнчех час ирĕлме пултаракан апат çителĕклĕ пулать Калчасем шăтса тухнă хыççăн кашни гектар çине пĕрер центнер аммиаклă селитра сапса апат панă.

Вăхăтра тата лайăх кăпкалатнă, удобренисемпе çемçетнĕ çĕр çинче колхозниксем пысăк тухăçлă сурхи тулă çитĕнтернĕ, вăтам шутпа кашни гектартан 19-шар центнер ытла тухнă.

Выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлемесĕр колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатса пыма пултараймасть. Пысăк выльăх-чĕрлĕх усрани артель пуянлăхне ӳстерме, çавăнпа пĕрлех уй-хирти тăпрана çемçетме тислĕк çителĕклĕ хатĕрлеме кирлĕ.

Пĕлтĕр артель нумай çул ӳсекен курăксен утине çителĕклĕ пухса илнĕ. Кунсăр пуçне сулан курăкĕ тата выльăх апачĕ тумалли çĕнĕ культура—пайза акса тунă. Сулан курăкне 5 гектар çине сарлака ретсемпе майăн 20-мĕшĕнче акнă. Кашни гектар çине 16-шар килограмм вăрлăх кĕртнĕ. Калчасем шăтса тухнă хыççăн ретсем хушшине кăпкалатнă тата кашни гектар пуçне 1.2 центнер аммиаклă селитра сапнă. Каярахпа ретсем хушшине иккĕмĕш хут кăпкалатса тухнă. Сулан курăкĕ вăтам шутпа кашни гектартан 388 центнер, курăк вăрри пĕр гектартан 15 центнера яхăн тухнă.

Колхозниксем хĕле кĕрсенех уй-хирте юр тытас ĕçе анлăн туса пыма тытăнчĕç. Вĕсем кĕрхи тырăсемпе нумай çул ӳсекен курăксем çинче çеç мар, сурхи тырăсем акмалли участоксем çинче те юр тытаççĕ.

Колхозри пур бригадăсем те кăçал уй-хире тислĕк нумай кăлараççĕ. Колхозниксем фермăсенчен çеç мар, хăйсен килĕсенче пухăннă тислĕке те колхоз уй-хирне турттараççĕ.

Кăçалхи çуркунне колхоз ыраşпа кĕрхи тулă калчисене, вăрлăх валли хăвармалли нумай çул ӳсекен курăксене, кок-сагызпа сурхи паха культурăсен калчисене пурне те апат пама хатĕрленет. Калчасене апат пама пин центнера яхăн минераллă удобренисем кӳрсе килнĕ.

Колхоз председателĕ Долгов юлташ артель членĕсене республикăри вăйлă тырпул ăстисен опычĕпе анлăн паллаштарма тăрăшать 1950—1951 çулсенче артель членĕсем Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан тата Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче экскурсире пулнă, вĕсен ĕçри паха опычĕсемпе паллашнă.

Нумай колхозниксем виçĕ çул вĕренмелли агротехникăллă курсра хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстереççĕ, теориллĕ вĕренĕве практикăллă ĕçпе сыхăнтарса пыраççĕ.

«Гвардеец» колхоз членĕсем, механизаторсемпе тачă çыхăнса ĕçлесе, çĕрĕç культурине пĕрмаях ӳстерсе пыраççĕ, çитес ик-виçĕ çул хушшинче тĕштырăсен тухăçлăхне кашни гектар пуçне 30 центнера çитерессишĕн, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешеççĕ

А КУЛЯЕВСКИЙ,
Чкаловски районĕнчи ялхуçалăх пайĕн главнăй агрономĕ.

Чăваш çамрăкĕсем Мускаври стройкăсенче

Мускав! Пирĕн Тăван çĕршывăн мухтавлă столици. Вăл пысăк, хăватлă, капăр.

Мускав кулленех ÿсет. Унăн пур кĕтессисенче те, пур районĕсенче те пысăк строительство ĕçĕсем пыраççĕ. Мускав центрĕ тавра сакăр çĕрте 26—32 хутлă çуртсем ÿссе ларчĕç. Ленинские горы текен вырăнта тĕнчери чи чаплă наука дворецĕн—университетăн çуртне туса çитереççĕ. Киевски вокзалран инçе мар, Мускав—Атăл каналĕ урлă Бородино кĕперне тăваççĕ. Çак кунсенче метрополитенăн çĕнĕ линийĕ ĕçе кĕчĕ. Çак стройкăсенче Чăваш республикинчен килнĕ çамрăк колхозниксемпе колхозницăсем те сахал мар ĕçлеççĕ.

Эпир министерствăн «Строитель» трестĕн заводĕнче пултăмăр. Ку завод бетон плитасем, пусма картлашкисем туса кăларать. Çак япаласем столицăри пур стройкăсене те саланаççĕ. Заводра пур ĕççене те механизациленĕ.

— Анчах техника ăна юратакан, пĕлсе ĕçлеттерекен ăста рабочисемсĕр нимĕн те тăваймасть,—тесе каласа парать завод директорĕ Н. Мальцев инженер.—Пирĕн çыннисем питĕ пултаруллă, ĕçчен халăх.

Эпир заводри нумай рабочисен землякĕсем пулнине пĕлсен завод директорĕ Мальцев юлташ савăнчĕ. Заводри пур участоксене те кăтартса çÿрерĕ, рабочисемпе паллаштарчĕ.

— Вĕсем пирĕн чи лайăх стахановкăсем,—тесе кăтартать директор икĕ чăваш хĕрĕ çине. Пĕри—Куславкка районĕнчи «Коммунар» колхоз членĕ Антонина Степанова, тепри—Мария Смирнова—Вăрмар районĕнчи «Радио» колхозран.

— Сăмахлама хваттере пырăр, пирĕн те хамăр республика пурнăçĕ çинчен нумай пĕлес килет,—тесе васкать Тоня Степанова. Вăл авнă пралуксене форма ăшне вырнаçтарса хурать, унтан хуллен шуса пыракан куркана тытса цемент шĕвекне форма çине юхтарать. —Тепĕр минутран форма хĕрÿ кăмакана шăвăнса кĕрсе каять. Мария Смирнова та ĕçре Тоняран кая юлмасть.

Мускаври стройкăсенче ик-виç çул хушши ĕçлекенсемпе пĕрлех иртнĕ кĕркунне кăна килнĕ чăваш çамрăкĕсем те ĕçре хастарлăх кăтартаççĕ.

...Ленинградски шоссепе тухса кайнă чухне сулахай енче хула хĕррипе юлашки икĕ çул хушшинче нумай хутлă çĕнĕ çуртсем ÿссе ларчĕç. Ку вăл Песчаный урам Ăна Мускавра «сурт-пĕре хăвăрт тăвас енĕпе ĕçлекен лаборатори» теççĕ. Чăн та, кунта 6—7 хутлă 100—150 хваттерлĕ çуртсене 2—3 уйăхра туса лартаççĕ.

Песчаный урамри çуртсене «Мосжилстрой» кантурĕ тутарать. Çав строительствăсене Чăваш республикинчен килнĕ рабочисем пин çын ытла ĕçлет. Вĕсенчен нумайăшĕ çак асăннă урамра пурăнаççĕ.

Акă Советски районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхозран килнĕ Тамара Бойкован бригади. Унăн бригадинче 11 çын—К. Самарина, Л. Крылова, Н. Уткина, Х. Арбекова, Т. Михайлова, З. Смирнова тата ыттисем те пурте Советски районĕнчен.

— Матур, ĕçе юрататан халăх,—тет Крылов прораб вĕсем çинчен.

Мускаври стройкăсен тепĕр илемлĕ енĕ пур. Вăл—халăхсен ĕçри туслăхĕ. Эпир пулнă стройкăра Полтава облаçĕнчен килнĕ украинецсем, Мускав тата Тамбов облаçĕнчен килнĕ вырăссем, чăвашсем, мордвасем т. ыт. те ĕçлеççĕ. Вĕсен туслăхĕ ĕçпе çирĕпленнĕ. Вĕсем пурте пĕр кăмăллă пулса ĕçлеççĕ, миршĕн, коммунизмăн çутă кунĕсемшĕн кĕрешеççĕ.

...Каçхине. Мускав кăнтăрлахи пекех çутă, яланхи пекех илемлĕ. Эпир Сайкин урамĕпе пыратпăр. Пирĕн умра 42-мĕш çурт. Вăл 8 хутлă, питĕ пысăк, илемлĕ. Кашни хваттерĕнчех радио, газ, тĕкĕрсем. Кашни под'ездрах лифтсем. Çак çуртрах пысăк клуб пур. Кунта Чăваш республикинчен килнĕ колхозниксемпе колхозницăсем—пурĕ пин çын ытла пурăнать.

Кĕрлет общежити. Савăнать ĕçрен таврăннă халăх. Хĕрÿ чĕреллĕ ĕççыннине кăнтăрлахи пархатарлă ĕç каçхине тулли кăмăлпа савăнма май парать. Кашни пÿлĕмрех çĕнĕ юрă шăранать:

«Ан авăн, шĕшкĕ, ан авăн...»
«Тăван çĕршыв, Тăван çĕршыв...»

Çĕнĕ юрă та пур:

«Мухтав сана, Мускав,
Çĕршыв чĕри, мухтав!..»

Хăшпĕрисем паян кăна туяннă çĕнĕ костюмĕсемпе тĕрлĕ çипуççене виçеççĕ, теприсем тумланса кинотеатрсене каяççĕ е репетицие васкаççĕ.

Общежити çумĕнче художествăллă пултарулăх кружокĕсем ĕçлеççĕ. Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕнче пурĕ 30 çын тăрать. Уяв кунĕсенче е шăматкун каçхине вĕсем час-часах хăйсен клубĕнче концертсем параççĕ.

Мускавра ĕçлекен чăваш çамрăкĕсен пĕр-пĕрин патне час-часах хăнана çÿресси йăлана кĕнĕ. Ĕçре çирĕпленнĕ туслăхран хакли мĕн пултăр! Акă паян та, Сайкинăн тусĕсем патне Бородино кĕперне тунă çĕрте ĕçлекен П. Константинова патне унăн юлташĕсем, Сталин ячĕпе тăракан автозаводра ĕçлекен М Маткина, Н Азамова т ыт те килнĕ. Юлташĕсемпе, тусĕсемпе тĕл пулсан калаçу ялан ĕç мĕнле пыни çинчен пуçланать. Вĕсем пĕрин-пĕрин ĕçĕнчи ÿсĕмĕшĕн савăнаççĕ.

— Юлташсем! Паян Мускав урамĕнчи Хисеп хăми çине Нинăпа Марийăн пысăк портречĕсене кăларса çакнă,— тет П Константинова Азамовăпа Маткина çине кăтартса. Пурте ĕçре геройсене хупăрласа илеççĕ, вĕсемпе пĕрле савăнни савăнать.

Çакă пурте ырăн паянхинчен хастарлăрах, тухăçлăрах ĕçлеме хатĕррине пĕлтерет. Хăйĕн Тăван çĕршывне юратакан совет çыннин коммунизм кунне сывхартассишĕн кĕрешме иксĕлми вăй пуррине пĕлтерет Çак вăя унăн аллине аслă Сталин тата вăл ертсе пыракан мухтавлă большевиксен партийĕ панă

Я. ПРОКОПЬЕВ.

ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ

Чăваш АССР государство издательствинче çакăн пек кĕнекесем пичетленсе тухнă:

Чăвашла:

БОРИС ПОЛЕВОЙ.—**Эпир—совет çыннисем.** Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен çырнă калавсем М. Рубцовпа Г Ефимов куçарнă Кĕнеке хуплашкине Г. Харламьев художник тунă.

Кĕнекере 340 стр., тиражĕ 5.000 экз., хакĕ—6 тенкĕ.

В. КАВЕРИН.—**Икĕ капитан.** Икĕ томлă роман. В. Урдашпа Н Ильбек куçарнă. Кĕнеке хуплашкине В. Солодовников художник тунă.

Кĕнекере 712 стр. тиражĕ 5.000 экз., хакĕ—12 тенкĕ.

Вырăсла:

В помощь учителям биологии. Сборник материалов

Кĕнекере 92 стр, тиражĕ 3.000 экз., хакĕ—1 тен. 30 пус.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводра сменăри нормăна çичĕ сехетре е тата хăвăртрах тултарассишĕн социализмлă ăмăрту анлă сарăлса пырать.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: иккĕмĕш сборочнăй цехри нарезчица **А. Нефедова** юлташ. Вăл февральти задание 223 процент тултарнă.

В. АЛЕКСЕЕВ фотоÿкерчĕкĕ.

Эпĕ çĕршыв çинчен юрлатăп

Чăваш хĕрарăмĕн Октябрьти Социализмлă Аслă революциччен пурнăçĕ çинчен цирĕн кăвар чĕреллĕ поэт Çеçпĕл Мишши хăйĕн «Чăваш арăмне» ятлă сăввинче çапла çырнă:

«Хура-шур анчах курмашкăн
Кам çуралса ÿснĕ?
Сут тĕнчере йывăр хурлăх
Кам ытларах тÿснĕ?
Камăн вăл кун-çулĕ йывăр,
Хурлăхлă кун-çулĕ?
Чăваш арăмĕн пулмасăр
Камăн тата пулĕ».

Çакăн пек «сут тĕнчере йывăр хурлăх» курма кăна тиветчĕ ĕнтĕ мана та Октябрьти революци пулман пулсан.

Эпĕ пĕчĕклех тăлăха юлнă. Мана совет влаçĕ пăхса ÿстерчĕ. 1921 çулта ачасен çуртне вырнаçрăм. Унта эпĕ 1929 çулччен пурăнтăм. Çав çул хам çуралнă яла, Вăрнар районĕнчи Çĕньял Хапăса таврăнтăм. Ялта колхоз организацилерĕç. Мана колхоз пулăшса пычĕ, эпĕ вара ялти шкултан ăнăçлăн вĕренсе тухрăм.

Пĕрремĕш пилĕкçуллăх вăхăтĕнче пирĕн çĕршывра çĕнĕ заводсем нумай турĕç, заводсенче ĕçлеме çынсем те нумай кирлĕ пулчĕ. Эпĕ Улатăрти ФЗУ-на вĕренме кĕтĕм. Унта икĕ çул вĕреннĕ хыççăн хама суракан заводра рабочи пулса ĕçлерĕм. Заводра çамрăксем нумаййăнчĕ пирĕн, питĕ хаваслăччĕ. Эпир хор кружокĕ, драма кружокĕ тата ытти кружоксем те организацилерĕмĕр. Эпĕ хор кружокне кĕтĕм.

Заводра ĕçленĕ чухне хор кружокĕнче хамăн пултарулăха ÿстерме пур майсем те пулчĕç. Пĕрле ĕçлекен рабочисене eпĕ юрласа кăтартмăн ĕнтĕ хăвăн юррусене.

Хамăрăн аслă Тăван çĕршыв çинчен, пилĕкçуллăх вăхăтĕнче ÿссе ларнă çĕнĕ заводсем çинчен, çĕнĕ пурнăç—телейлĕ, ырă пурнăç тăвакан совет çыннисем çинчен ăстан-ха чун-чĕререн хавхаланса юрламăн?

Комсомол райкомĕнче ĕçлекенсем пулăшнипе эпĕ часах Шупашкарти музыкальнăй училищĕне вĕренме кĕтĕм. Музыкăна питĕ тăрăшса, юратса вĕрентĕм. Училищĕрен вĕренсе тухса солистка пулса тăтăм Мĕн тери хаваслăнмарăм-ши куншăн эпĕ! Ара, ĕмĕтленни пурнăçа кĕчĕ вĕт! Пирĕн çĕршывра мĕн тума ĕмĕтленетĕн—çавна тума пулатсх.

Анчах ĕмĕт тени сÿнтлă мĕн! Пĕр ĕмĕте пурнăçласан, татах пысăк ĕмĕтсем суралаççĕ: манăн лайăхрах та лайăх юрлас килет, хамăр Тăван çĕршыв çыннисене паттăр ĕçлеме хавхалантарас килет. Çыннăн телейĕ ĕçре. Халăхшăн мĕн чухлĕ усă нумайрах кÿретĕн, хăвна та çавăн чухлĕ телейлĕрех шутлатăн. Эпĕ хамăн телее хамăн юратнă ĕçре тупрăм.

Солистка пулса чылай вăхăт ĕçленĕ хыççăн, 1943 çулта эпĕ Саратоври консерватори çумĕнчи чăвашсен опера студине вĕренме кĕтĕм. Унтан 1948 çулта вĕренсе тухрăм. Çавăнтан пуçласа Шупашкарта филармонинче солистка пулса ĕçлетĕп. Солистка пулнăранпа чылай юрăсем, арисем, сонетсем юрларăм ĕнтĕ. Малтанхи çулсенче вырăс халăх юррисене, чăваш халăх юррисене тата Кривоносов çырнă «Хаваслăх» ятлă музыкăллă комедири уйрăм сыпăксене юрлаттăм. 1950 çулта Мускавра чăваш литератури каçĕсене ирттернĕ чухне, ытти писательсемпе поэтсем тата солистсем пекех, эпĕ те унта кайма тивĕçлĕ пултăм Мускавра эпĕ Ходяшев композитор çырнă «Ылтăн хирсем» ятлă кантатăпа тата Хирбю çырнă «Нарспи» музыкăра Нарспи арине юрласа патăм. Концерта пынă çынсем пирĕн юрăсене юратса итлерĕç.

Халĕ эпĕ хам вĕренсе тухнă консерваторинчи профессорсемпе, преподавательсемпе яланах çыхăну тытатăп, час-часах вĕсем патĕнче пулатăп. Профессорсем, преподавательсем пулăшнипе чылай оперăсенчи арисене юрлама вĕренетĕп, хăшĕсене юрлатăп та ĕнтĕ.

Тăрăшса ĕçлекен çынсене пирĕн çĕршывра хисеплеççĕ, чысласçĕ, Мана та 1950 çулта Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Указĕ тăрăх Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки ятне пачĕç. Çакăн пек пысăка хурса хаклани мана тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать.

Манăн умра халĕ ответлă та пысăк ĕç тăрать. Эпĕ Пустыльник композитор çырнă «Нарспи» оперăра Нарспи рольне юрлама хатĕрленетĕп. Нарспи ролĕ—чĕрене хумхантаракан, эпĕ çав тери юратакан роль. Çамрăк, хитре, хăюллă Нарспин сăнарĕ, унăн пурнăçĕ патша вăхăтĕнче хĕрарăмсен пурнăçĕ мĕнле пулнине кăтартса парать. Нарспие пусмăр тĕнчи çапса хуçать. Пирĕн çĕршывра пусмăр тĕнчине пĕтермен пулсан, çав асап тĕнчи пире те, Нарспие çапса хуçнă пекех, çапса хуçнă пулĕччĕ. Çакăн çинчен шухăшлатăп та хамăр çĕршыва, Ленин—Сталин партине чун-чĕререн тав тăватăп.

Е. ПИКУЛИНА,
Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки.

Кÿршĕ республикăсенче

Тутарстанри нефтяниксен ĕçри çитĕнĕвĕсем

Пирĕн Тăван çĕршыва хура ылтăн — нефть парса тăрас тĕлĕшпе Кавказ ку таранччен тĕп район шутланнă. Баку нефтяникĕсем пирĕн çĕршыври пĕтĕм нефтĕн тăватă пайĕнчен виçĕ пайне яхăн кăларса тăнă.

Юлашки вунпилĕк çул хушшинче Совет Союзĕн нумай районĕсенче, çав шутрах Уралпа Атăл хушшинче, нефтьрен питех те пуян çĕнĕ вырăнсем шыраса тупса ĕçе кĕртнĕ.

Уралпа Атăл хушшинчи районсенче нефтĕн пысăк запасĕсем пурри çинчен Иван Михайлович Губкин академик 1930 çултах каланă. Çав вăхăтранпа Пушкăрт, Тутар республикисенче тата Куйбышев облаçĕсенче шырав ĕçĕсем анлăн пуçланнă. Çак асăннă районсенче нефть запасĕсене тупса палăртсан, Сталин юлташ партин XVII съездĕнче Уралпа Атăл хушшинче нефтĕн хăватлă базине—«Иккĕмĕш Баку» тăвас задача лартнă.

1944 çулта Пушкăрт республикинчи Туймаза районĕнче девонла нефть сийĕсен чи пысăк запасĕсене тупнă хыççăн, Тутар республикинче те çавăн пек вырăнсене нумай палăртнă. Халĕ ĕнтĕ республикăн хĕвелтухăçĕпе кăнтăр хушшинчи вуншар районĕсенче нефть промышленноçĕ питех те хăватлăн аталанса пырать. Нефтяниксем валли çĕнĕ поселоксем, хуласем ÿссе лараççĕ.

Тутар республикинчи нефть промышленноçĕнче ĕçлекен кадрсен йышĕ пĕрмаях ÿссе пырать. Кунта нефть кăларакан кивĕ районсенчен те специалистсемпе квалификациллĕ рабочисем йышлăн ярса панă. Нефть промышленноçĕн предприятийĕсем çĕнĕ техникăпа пуянланса пыраççĕ.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 34 çул тултарни çинчен тунă докладра Л П. Берия юлташ юлашки темиçе çул хушши ĕнтĕ нефть кăларасси пирĕн çĕршывра çулленех тăватă миллион çурă тонна таран ÿссе пынине, 1951 çулта нефть кăлармалли плана ытлашшипех тултарнине палăртрĕ.

Çак çитĕнÿсене тăвас ĕçе Тутарстанри нефтяниксем те сахал мар вăй хучĕç.

Тутар республикинчи нефть промышленноçĕн работникĕсем, 1951 çулта социализмлă обязательствăсем илсе, Сталин юлташ патне янă çырура çапла çырчĕç: «Эпир 1951 çулта нефть кăлармалли плана срокчен тултарма тата планран ирттерсе 75 пин тонна нефть кăларма сăмах паратпăр Скважинăсем пăраламалли çулталăк планне декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне тултарса çитерĕпĕр».

Çапла вара Тутарстан нефтяникĕсем, аслă çулпуçа панă сăмаха чыслăн пурнăçлассишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарса, нефть кăлармалли çулталăк планне декабрĕн 6-мĕшĕ тĕлнех тултарчĕç.

Тутарстан нефтяникĕсем социализмлă обязательствăсене чыслă пурнăçлассишĕн Пушкăрт республикинчи нефтяниксемпе ăмăртса ĕçлерĕç. Çак ăмăрту икĕ республикăри нефтяниксен ĕçри туслăхне çирĕплетрĕ.

Нумаях пулмасть Тутарстанри «Бавлынефть» тата Пушкăрт республикинчи «Туймазанефть» тресчĕсен коллективĕсем хăйсен 1951 çулти социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухрĕç. Ĕçре пĕрпĕрне паха сĕнÿсемпе пулăшнипе малта пыракансен опытне анлăн сарса пынине тата техникăпа туллин усă курнине пула, ăмăртакан трестсем хăйсен социализмлă обязательствисене чыслă пурнăçланă.

Бавлăри тата Туймазари нефть предприятийĕсен коллективĕсем, 1952 çул валли социализмлă ăмăрту договорĕ турĕç. Ку договорта вĕсем иртнĕ çулхинчен чылай пысăкрах обязательствăсем илчĕç.

Тутарстан нефтяникĕсем иртнĕ çулта техникăпа усă курас тата государство укçи-тенкине перекетлес енĕпе те паллă çитĕнÿсем тунă. Нефть кăларас ĕçĕн хăйне ларакан хакне планпа палăртнинчен çичĕ процент йÿнетнĕ. Нефть промыслисем планран ирттерсе икĕ миллион та 850 пин тенкĕ укçа перекетленĕ.

Нефть кăларакансен ĕçри çитĕнĕвĕсем скважина пăралакансен хастарлă ĕçĕпе таччăн çыхăнса тăраççĕ. Буровиксен коллективĕсенчен нумайăшĕ, уйрăмах «Татбурнефть» трестĕнчи Домрачев тата «Бавлынефть» трестĕнчи Юдин, Нургалеев, Чикуров мастерсен бригадисем, скважинăсене планпа палăртнă срокран чылай малтан пăраласа пĕтерсе пычĕç.

«Татнефть» предприятийĕсен коллективĕсем иртнĕ çулта планран ирттерсе государствăна 75 пин тонна ытла нефть кăларса панă. Новаторсен патриотла пуçарăвĕсемпе ĕçре анлă усă курса, партипе правительство лартнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлассишĕн кĕрешсе, Тутарстанри нефть промыслисемпе бурени конторисен коллективĕсем, парти организацийĕсем ертсе пынипе, нефть кăларас тата скважинăсем пăралас ĕçсен хăйне ларакан хакне йÿнетеççĕ, чĕртаварсемпе материалсене чылай перекетлесе хăвараççĕ, производствăна комплекслăн механизацилесе тата автоматизацилесе пыраççĕ, техникăпа тата оборудованисемпе лайăхрах усă курма тăрăшаççĕ.

Тутар республикинчи нефтяниксем нефть кăларакан чи лайăх мастерсен — Мăтыгуллин, Валеев, Мусалин тата ытти юлташсен ĕçри çитĕнĕвĕсемпе тивĕçлипех мухтанма пултараççĕ. Ку мастерсем планран ирттерсе нефть кăларассишĕн, ĕçĕн хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн пыракан ăмăртура яланах мала тухаççĕ.

Нефтяниксем кăçал социализмлă ăмăртура татах та пысăкрах çитĕнÿсем тăвассишĕн çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах цĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тытăнчĕç.

Социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçласа пырса, «Бавлынефть» тресчĕн бурени конторин коллективĕ январь уйăхĕнче скважинăсем пăраламалли плана 115 процент тултарнă. Уйрăм бригадăсен ĕçри çитĕнĕвĕсем татах та пысăкрах Январь уйăхĕн планне Юдин юлташ ертсе пыракан бригада — 223 процент, Чикуров мастерăн бригади—191, Нургалеев мастерăн бригади 160 процент тултарнă.

Сталин юлташ çĕршыв умне кашни çулах 60 миллион тоннăна çити нефть кăларса пама задача лартрĕ. Аслă çулпуç лартнă çак пысăк задачăна пурнăçлассинче, Совет Союзĕнчи нефть кăларакан ытти центрсемпе пĕрлех, Тутар республикинчи нефть промышленноçĕ те паллă вырăн йышăнать.

Нефтьщĕн кĕрешни вăл пирĕн Тăван çĕршывăн экономикăллă вăй-хăватне малалла тĕреклетсе пырассишĕн кĕрешни пулать. Çакна нефтяниксем лайăх ăнланаççĕ. Çавăнпа вĕсем, партипе правительство Тутар республикине нефть кăлармалли питех те хăватлă район туса хунипе хавхаланса, Тăван çĕршыва нефть парса тăрассине ÿстерсе пырассишĕн хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр тăрăшса ĕçлеççĕ.

А. ФЕДОРОВ.

Хусан.

Чĕпсене пăхса ÿстересси çинчен

Вăрнар районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхозри кайăк-кĕшĕк фермин заведующийĕ А. В. Дмитриев юлташ инкубаторпа кăларнă чĕпсене пăхса ÿстерес ĕçе мĕнле организацилесси çинчен хаçат урлă ăнлантарса пама ыйтать.

Фермăра ĕçлекенсене пулăшас тесе, эпир хаçатăн паянхи номерĕнче А. В. Дмитриев юлташăн ыйтăвĕсем çине панă ответсене пичетлетпĕр.

Ыйту: Чĕпсене инкубатор станцинчен илсе ÿстерме хатĕрленес тĕлĕшпе хальхи вăхăтра колхозсенче мĕнле ĕçсем тумалла?

Ответ: Март-апрель уйăхĕсенче республикăри 17 инкубатор станцийĕ ĕçлеме тытăнать. Государство планĕ тăрăх, вĕсен кăçалхи апрель-июль уйăхĕсенче колхозсене 1.6 миллион чĕп кăларса памалла.

Чĕпсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ÿстерес тĕлĕшпе кашни колхозра хальхи вăхăтра тумалли ĕçсем çаксем пулаççĕ: инкубатор станцийĕпе договор тăвасси; апатсем, чĕпсене усрамалли çуртсем, ĕç хатĕрĕсем хатĕрлесси; фермăра ĕçлеме кирлĕ кадрсене суйласа илесси, вĕсене чĕпсем пăхас ĕçе вĕрентсе хатĕрлесси.

Кайăк-кĕшĕк ĕрчетес тĕлĕшпе государство планне тултарас тесе, колхозăн производство планĕнче инкубаторпа кăларнă чĕпсене мĕн чухлĕ илсе ÿстерессине палăртмалла. Чĕпсем илме колхозсен халех инкубатор станцийĕпе договор тумалла. Договор тунă чух çакна асра тытмалла: фермăсенче усрама кирлĕ пулакан кашни 100 чăх валли инкубатор станцинчен 300—350 чĕп илес пулать, мĕншĕн тесен мĕнпур чĕпсенчен 65 процентне яхăн автансем, лайăх аталанса çитеймен пирки фермăра усрама юрăхсăр чĕпсем пулаççĕ.

Чĕпсене пăхса ÿстерме ăшă, çутă, типĕ, яланах таса сывлăш тăракан çуртсем пулмалла Сивĕ çанталăкра та çав çуртсенче ăшă яланах пĕр виçере, урайĕнчен пĕр метр çÿлĕшĕнче 18—20 градус тăмалла. Ăшă çителĕклĕ пултăр тесе, çуртăн урайĕ çийĕн е айĕн каякан мăрьеллĕ кăмака (боровая печка) тумалла. 250 чĕппе ăшăтса тăма 2,5 метр боровой мăрье кирлĕ. Урай лаптăкĕшĕн кашни тăваткал метрĕ çинче пĕр талăкри чăх чĕпписене 20 пуç е 13 кăвакал чĕппи, 10 кăркка чĕппи, 8 хур чĕппи усрама юрать. Чĕпсене пĕчĕк ушкăнсемпе пăхса усрани кирлĕ. Çавăнпа та çуртсенче тимĕр сеткăпа е хăма çапса пĕр пек пĕчĕк пÿлĕмсем (секцисем) тумалла Хур-кăвакал чĕпписене усрамалли пÿлĕм стенисен çÿлĕшне 50 сантиметр, чăх е кăркка чĕпписем валли 2 метр тăваççĕ. Кашни пÿлĕме талăкри чăх чĕпписене 250 е 200 кăвакал чĕппи, 150 кăркка чĕппи, 100 хур чĕппи вырнаçтарма юрать. Çапла вара 250 чăх чĕппине усрамалли пÿлĕмĕн урай лаптăкĕ 12,5 тăваткал метр пулмалла. Чĕпсене çутă çителĕклĕ пултăр тесе, чÿрече лаптăкĕшĕн виçĕ урай лаптăкĕшĕнчен 8 хут кăна сахалтарах кирлĕ. 5—6 куна çитнĕ чĕпсене ирĕке туха çÿреме, çуртăн чÿречисем айне, урайран кăштах çÿлерех, кашни пÿлĕм тĕлне пĕр шăтăк тумалла. Шăтăкăн виçи 25×25 сантиметр пулать. Вĕсене шалтан тата тултан питĕрме хупăлчасем кирлĕ.

Çуртăн кăнтăр енне, 2 метр çÿлĕш тимĕр сеткăпа е хăмапа çăтă çапса карта тытса. чĕпсене ирĕкре çÿремелли вырăн туса памалла 250 чăх чĕппине ирĕкре çÿремелли вырăн лаптăкĕ 25 тăваткал метртан кая пулмалла мар Çав вырăнта симĕс курăк сахал ÿсет пулсан, çуркунне юр кайнă хыççăнах пĕтĕм çĕр лаптăкне сухаласа сĕлĕ е урпа акмалла.

Кашни колхозрах чĕпсене пăхса ÿстерме кирлĕ тĕрлĕ йышши инвентаре çителĕклĕ хатĕрлесе хумалла. 10 куна çитичченхи чĕпсене тăрантарма лаптăк вăлашка кирлĕ. 30—75 сантиметр пысăкăш çак вăлашкаран 40 чăх чĕппине апат парса çитерме юрать. 10 кунтан иртнĕ чăх чĕпписем валли хăмаран çапса тунă шĕвĕр тĕплĕ вăлашка кирлĕ Унăн тăршшĕ 80 сантиметр, сарлакăшĕ 16 сантиметр, çÿлĕшĕ 8 сантиметр пулать. 30 чăх чĕппине апат çитерме çакнашкал пĕр вăлашка пулмалла. Шĕвĕр тĕплĕ вăлашка çине, чĕпсем ларса апата вараласран, çаврăнса каякан çаврака патак çапмалла. Чĕпсем шыв ĕçнĕ чух пĕсехисене йĕпетни вĕсен сывлăхĕшĕн питĕ сиенлĕ, çавăнпа та кашни фермăрах тĕм чÿлмекрен тунă автоматла шыв савăчĕсем çителĕклĕ хатĕрлемелле. Кашни 60—70 чăх чĕппи валли 2—3 литр шыв кĕрекен пĕр савăт пулмалла. Чĕпсем пурăнакан çуртăн кашни пÿлĕмне кĕл-хăйăр тултарнă ешĕк лартмалла. Унăн тăршшĕ 100 сантиметр, сарлакăшĕ—60, çÿлĕшĕ—18 сантиметр.

Чĕпсене çитерме халех кирлĕ чухлĕ апат хатĕрлесе хумалла.

Чĕпсене пăхса ÿстерме уйăрнă колхозниксемпе колхозницăсене 5—7 кунлăх семинарсенче вĕрентсе хатĕрлемелле.

Ыйту: Чĕпсене инкубатор станцинчен фермăна хăш вăхăтра илсе килни лайăхрах?

Ответ: Чĕпсене çăмартасем ăшĕнчен тухнă хыççăн 6—10 сехетрен кая юлмасăр инкубатор станцинчен фермăна илсе каймалла

Пирĕн республикăри инкубатор станцийĕсенче чĕпсем пуринчен ытларах каçхине тухаççĕ Çавăнпа та фермăра ĕçлекенсен чĕпсене çăмарта ăшĕнчен тухнă хыççăнах илсе каяс тесе ирех пымалла. Инкубатор станцийĕ кашни колхоза чĕпсем илме хăш вăхăтра пымалли çинчен 10—15 кун малтан пĕлтерет.

Кашни колхозрах чĕпсене инкубатор станцинчен илсе кайма ятарласа тунă ещĕксем пулмалла. Ещĕкĕн тăршшĕ 60 сантиметр, урлăшĕ 60 сантиметр, çÿлĕшĕ 18 сантиметр. Çак ещĕкĕн çÿлти хĕррине 2 сантиметр сарлакăш çаврака шăтăксем туса тухаççĕ, шал енчен—çÿхе хăмасемпе хĕреслесе çапса 4 пĕр пек пÿлĕм тăваççĕ, пÿлĕмсен кĕтессисене вискĕтеслĕ планкăсем çапаççĕ. Кашни пÿлĕме 25 чăх чĕппи е 15 кăвакал, е 10 хур чĕппи вырнаçтарма юрать. Ещĕк тĕпне тусанăр утă е тураннă улăм 2—3 сантиметр хулăнăш сармалла.

Çул çине илсе каяс умĕн, çавăн пекех çул çинче те чĕпсене апат çитерме, шыв ĕçтерме юрамасть. Фермăна илсе çитернĕ чĕпсене ăшă çурта пÿлĕмсем тăрăх вырнаçтарса тухсан, пĕр тăхтамасăр çăмăрла пĕçернĕ çăмарта вĕтетсе тата шыв памалла.

Ыйту: Иртнĕ çулсенче эпир чĕпсенчен вилекеннисем тата сусăрланаканнисем пуринчен ытларах каçхине пулнине асăрхарăмăр. Чĕпсене каçхине пăхса усрас ĕçе фермăра мĕнле организацилемелле?

Ответ: Питех те тĕрĕс ыйту. Çак ыйту çине наука работникĕсен те, кайăк-кĕшĕк ĕрчетес енĕпе ĕçлекен специалистсем те, колхозсенче те сахал пăхаççĕ. Чĕпсене каçхине пăхса усрас ĕçе тĕрĕс организацилеме тăрăшманни кайăк-кĕшĕк ĕрчетес ĕçре пысăк чăрмав кÿрет.

Фермăра ĕçлекенсем асăрханă пулĕ: сывăрнă чухне чĕпсем пĕр-пĕрин çывăхне ларас, çуртра ăшă çителĕксĕр пулсан, пĕр-пĕрин çине купаланас йăла пур. Паллах, чĕпсем каçхине сывăраççĕ. Вĕсене канлĕн сывăрма ăшă çителĕклĕ кирлĕ. Анчах каçхине çанталăк кăнтăрлахинчен сивĕрех, сулхăнрах пулать, чĕпсем пурăнакан çуртри ăшă та кăнтăрлахи фермăран чакма пултарать. Çавăнпа та чĕпсем пурăнакан çуртра каçхине ăшă кăнтăрлахинчен 1,5—2 градус ытларах пулмалла.

Чĕпсем каçхине канлĕн, пĕрне-пĕри кансĕрлемесĕр сывăрччăр тесен, шăпăлăх, тĕттĕм кирлĕ Анчах чĕпсем мĕнле сывăрнине тĕттĕмре асăрхаса тăма йывăр. Хăшпĕр колхозсенче чĕпсем каçхине епле сывăрнине тĕрĕслеме вăхăтăн-вăхăтăн хунар е лампа çутаççĕ. Анчах çапла тăвакансем кайăк-кĕшĕк кĕтмен çĕртен пĕр-пĕр сасă, çутă пулнипе сасартăк шикленме, пĕр-пĕрне суранлама пултарнине шута илмеççĕ. Пирĕн сăнавсем çакна кăтартса параççĕ: чĕпсем пурăнакан çуртра каçхине яланах сахал çутă тытни чĕпсемшĕн сиенлĕ мар, çакă фермăри каçхи ĕçсене сас-чĕвĕсĕр тата тĕплĕ тума пулăшать. Анчах çутă ытлашши пулни чĕпсене лайăх сывăрма кансĕрлет. Лампа е хунар çуттине чĕпсем сывăракан вырăна—урайне сахалтарах ÿкмелле тумалла.

Ыйту: «Чăваш Коммуни», «Советская Чувашия» хаçатсем Калинино районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхозра чĕпсене сахалтарах, улшăнса тăракан ăшă парса тата апат çитернĕ хыççăн сывăрса кантарса ÿстерни лайăх пулни çинчен çырнăччĕ. Чĕпсене çак меслетпе пăхса ÿстерессине мĕнле организацилемелле?

Ответ: Кайăк-кĕшĕк ĕрчетесси çинчен калакан кĕнекесем, правилăсем, инструкцисем çамрăк чăх чĕпписене пăхса усрама яланах пĕр виçере тăракан ăшă (29—30 градус) кирлĕ, тесе çыраççĕ. Чăх чĕпписем çитĕнсе пынă майĕн, кашни эрнерен, ăшă виçине 1—2 градус чухлĕ чакарса пыма хушаççĕ. Чĕпсене çапла нумай тата пачах улшăнман ăшăра ÿстерни вĕсемшĕн хăйсен амăшĕ айĕнче ÿссе çитĕннĕ чухнехи условисемпе пĕр пек-и-ха? Çук. Фермăра ĕçлекенсем çавна асăрханă пулĕ: амăшĕпе ÿсекен чĕпсем апат çинĕ чух яланах сахалтарах ăшăпа усă кураççĕ, вăхăтăн-вăхăтăн чупса çÿреççĕ, кирлĕ чух амăшĕн çуначĕсем айне ăшăнма кĕрсе лараççĕ. Амăшĕн çуначĕсем айĕнче чĕпсем сывăрса канаççĕ. Çавăнпа та чĕпсен амăшĕ пуринчен ытла тĕттĕмрех, шăплăх вырăна вырнаçса чĕпсене хупласа ăшăтма, сывăрса кантарма тăрăшать. Çапла вара амăшĕпе ÿсекен чĕпсем апат çинĕ тата ирĕкре çÿренĕ чух сахалтарах ăшăпа, сывăрнă чух ытларах ăшăпа усă кураççĕ, вĕсем çанталăк тата ытти тулашри условисене çамрăклах лайăх хăнăхса пыраççĕ, патвар, çирĕп сывлăхлă ÿсеççĕ. Çавăнпа та чĕпсене амăшĕсĕр ÿстернĕ чух та апат панă вăхăтра сахалтарах, апатлантарнă хыççăн нумайрах ăшă парса тăмалла.

1951 çулхи майăн 8-мĕшĕнче Хрущев ячĕпе тăракан колхоз Вăрнарти инкубатор станцинчен 1.000 чăх чĕппи илчĕ. Чĕпсене малтанхи вăхăтра пăхса ÿстерме йывăр, апла пулин те Хрущев ячĕпе тăракан колхозра фермăри пĕтĕм чĕпсенчен малтанхи 3 уйăх хушшинче 98,7 процент сывă пăхса ÿстернĕ. Чĕпсене малтанхи кунтан пуçласах 25—26 градус ăшă тăракан пÿртре кăна усранă, ăшă виçине кашни 5—6 кунтан 1—2 градус чакарса пынă. Апат çинĕ чух, форточкăсене уçса, ăшă виçине тата 1—1,5 градус чухлĕ сахаллатнă. Апат çинĕ хыççăн çуртăн кантăкĕсене хупласа, тĕттĕмре чĕпсене 30—40 минут хушши сывăратса кантарнă.

Кунта çакна каламалла: чĕпсен сывлăхĕшĕн çуртри ăшă вăхăтăн-вăхăтăн 1—2 градус таран улшăнса тăни хăрушă мар, анчах витĕр вĕрекен çил, урай сивĕ пулни тата пăчă сывлăш питĕ сиенлĕ. Çавăнпа та çуртăн урайĕ шăтăксăрлă, пикĕссем хушшипе çил вĕрекен пулмалла мар. Чĕпсен айне яланах таса, вĕтĕ, çемçе улăм сарса памалла. Улăм айне çÿхе сий хăйăр е типĕ торф хуни те усăллă.

А. ИВАНОВ,
Вăрнарти инкубатор станцин аслă зоотехникĕ, кайăк-кĕшĕк ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн научнăй сотрудникĕ.

Тĕнчери лару-тăру

ГЕРМАНИПЕ МИРЛĔ ДОГОВОР ТУТАРАССИШĔН ТĂРĂШНИ

Демократиллĕ Германи Республикин правительстви СССР, США, Англи тата Франци правительствисенчен Германипе мирлĕ договор тăвас ĕçе васкатма ыйтни вăл—нимĕç халăхĕ пĕрлĕхлĕ, никама пăхăнман, демократиллĕ тата мире юратакан Германи тăвассишĕн кĕрешнине усăллă кăтартса паракан тĕслĕх пулса тăрать.

1951 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕпе октябрĕн 10-мĕшĕ хушшинче Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати Бонн «парламентне» çырусем янă, çав çырусенче Наци пухăвне суйламалли демократиллĕ суйлава ирттересси тата мирлĕ договор тăвас ĕçе васкатасси çинчен ямă Пĕтĕм Германири канашлăва пухмалла тесе сĕнÿ панă. Çак сĕнÿ пĕтĕм нимĕç халăхĕн пурнăçри интересĕсене килĕшсе тăрать. Анчах Хĕвеланăç Германири правительство ку сĕнĕве йышăнман. Вĕсем, хăйсен хуçисем—Америка влаçĕсем—хушнине пурнăçласа, асăннă сĕнĕве йышăнма килĕшмен. Çакăнтан Бонри правительсен шайкки Германи халăхĕн интересĕсене шута илесшĕн мар пулни уççăнах палăрнă.

Унтан та ытларах, Бонри правительсем, иртнĕ вăрçăра Германие парăнтарнăшăн тавăрма тăрăшакансене, Хĕвеланăç Германирен çĕнĕ вăрçă вучахĕ тăвас çулпа малалла кайнă. Кун çинчен çак фактсем каласçĕ: Бонри «парламент» «Шуман планĕ» çумне хутшăнма, унпа килĕшÿ решени йышăннă, Хĕвеланăç Германие Хĕвеланăç Европăри çĕршывсен оборони текен пĕрлешĕве кĕртме килĕшнĕ; унта пурте çар службине пулмалли закон хатĕрлеççĕ. Çавăнпа та Демократиллĕ Германи Республикин правительстви, нимĕç халăхĕ хушнипе Германие çĕнĕрен пĕрлĕхлĕ çĕршыв туса хурассишĕн тата миршĕн тăрас шухăш-ĕмĕт вăйланса пынине шута илсе, тăватă аслă державăран мирлĕ договор тăвас ĕçе васкатма ыйтнă. Мирлĕ договор туни Германи милитаризмне çĕнĕрен çĕклентерес хăрушлăха пĕтерĕ пулĕччĕ, нимĕç халăхне мире юратакан халăхсемпе пĕр тан праваллă пулма май панă пулĕччĕ, Германи государстви пĕр çĕршыва пĕрлештерме, ăна мирĕн аталантарма тата Европăри мире сыхласа хăварма пулăшнă пулĕччĕ.

Демократиллĕ Германи Республикин правительстви чĕнĕвĕ пирки Германи рейхсканцлерĕ пулнă Вирт çапла каланă: Германи Хĕвелтухăç пайĕнчи правительстви Хĕвелтухăç Германипе Хĕвеланăç Германи пĕр-пĕрне ăнланса илмелле тăвас çул-йĕр тытса пымалла тăвасшăч, Германин икĕ пайĕн правительствисем пĕр-пĕрне ăнланса илмелле тăвасшăн тăрăшать, çавăнпа пĕрлех Германие оккупациленĕ тăватă союзлă держава (вĕсем Германи тĕлĕшĕпе обязательствăсем илнĕ) пĕр-пĕрне ăнланса илес çул-йĕрпе пымалла тăвассишĕн тăрăшать».

Чăн та, Потсдамри килĕшÿ çине алă пуснă державăсем Германипе тĕрĕс, килĕшÿллĕ мирлĕ договор тăвас пирки сăмах панă, обязательствăсем илнĕ. Апла пулин те, США, Англи тата Франци хăйсем алă пусса çирĕплетнĕ килĕшÿсене пăсас çул çине тăнă. Вĕсем темиçе çул хушши ĕнтĕ нимĕç халăхĕ мирлĕ договор тăвасшăн пулнине, унăн законлă ыйтăвне пачах та шута илмеççĕ. Хĕвеланăçĕнчи державăсем Демократиллĕ Германи Республикин чĕнĕвĕ çине халиччен те ответ памарĕç. Хĕвеланăçĕнчи виçĕ держава Германие çĕнĕрен пĕрлĕхлĕ государство туса хурасшăн мар тата Европăра мирлĕ пурнăç тăвасшăн мар. Вĕсем çавăн пек политика тытса пыни çак çĕнĕ фактран та, агрессиллĕ Атлантика союзĕн совечĕ текенскерĕн Лиссабонри сессийĕнче вĕсем Хĕвеланăç Германире халĕ тăвакан çара—нимĕçсен фашистла çарне—«Европа çарĕ» текенскерне хутшăнтарма решени йышăннинчен те, курăнса тăрать. Вĕсем Германипе мирлĕ договор тăвасшăн мар. Вĕсем малашне те нумай çулсем хушши Германие пайланипех хăварасшăн, унăн хĕвеланăçĕнчи облаçĕсемпе авантюрăллă çĕнĕ вăрçăсен бази туса усă курасшăн.

Демократиллĕ Германи Республикин правительстви чĕнсе калани çине Совет Союзĕн правительстви ырă кăмăлпа пăхрĕ. Совет правительстви хăйĕн мире сыхласа хăварассишĕн тата ăна тĕреклетессишĕн тăрăшас политикине яланах çирĕп тытса пырать. Совет правительстви февралĕн 20-мĕшĕнче «Германипе мирлĕ договор тăвас тата Германи государствине çĕнĕрен пĕрлĕхлĕ çĕршыв туса хурас ĕçе васкатма пур майсемпе те тăрăшĕ», тесе пĕлтерчĕ.

Нимĕç халăхĕ Совет правительствин ответне хавасланă кĕтсе илчĕ. Çавăн пек ответ панăшăн нимĕç халăхĕ Совет правительствине пĕтĕм чун-чĕререн тав турĕ.

Германин пур пайĕсенчен те килекен нумай хыпарсем çакăн çинчен калаççĕ: нимĕç халăхĕ мирлĕ договоршăн кĕрешессине нихçанхинчен анлă сарса тата вăйлатса пырать, çав кĕрешĕве халăхăн пур сийĕсем те хутшăнса пыраççĕ. Çак кĕрешÿ мире тĕреклетес тата сыхласа хăварас тĕлĕшпе тăвакан пысăк ĕç пулса тăрать, ку кĕрешĕве мире юратакан мĕнпур этемлĕх ырлать.

ФРАНЦИРЕ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТĔЛĔШПЕ МĔНШĔН ÇĔНĔ КРИЗИС ПУЛСА ТĂНĂ

Февралĕн 29-мĕшĕнче Францире Эдгар Фор правительстви вырăнтан тухнă. Ку правительство влаçра ултă эрне кăна тытăнса тăнă. Çапах парламентра «Европа çарне» тăвасси çинчен калакан закона йышăнтарма ĕлкĕрнĕ. Çав закон Хĕвеланăç Германин агрессиллĕ çарне пухма ирĕк панине пĕлтерет. Атлантика союзĕн совечĕ текенскерĕн Лиссабонри сессийĕнче Фор правительстви Америка империалисчĕсем Францин çар расхочĕсене 1952 çулта 1.400 миллиард франка çитерме тата «Атлантика çарĕ» валли кăçал Францин 12 дивизине пухса хĕçпăшаллантарма хушнипе килĕшнĕ.

Вăрçа хатĕрленмелли питĕ пысăк расходсене витме укçа пухас шутпа Фор финанс законĕн çĕнĕ проектне хатĕрленĕ, унта налогсене 15 процент ÿстерме, Франци чугун çулĕсене тытса тăма, пурăнмалли çурт-йĕрсем лартма памалли укçа хисепне, ĕçсыннисене социальнăй обеспечени енĕпе пулăшу памалли укçа хисепне чакарма палăртнă. Анчах налогсене ÿстерес пирки сасăланă чухне парламент Фор правительствине шанас мар тесе решени йышăннă. Фор правительствине хирĕç 309 депутат, ун майлă 283 депутат сасăланă.

...Франци правительстви вырăнтан тухни çакна кăтартса панă: Францин нациллĕ интересĕсемпе çĕршыври Америка хушнине туса тăракан правительсен политики хушшинчи хирĕçÿсем ытларах та ытларах çивĕчленсе пыраççĕ. Вăрçа хатĕрленме тухакан расходсен йывăрлăхне Франци халăхĕ текех тÿсесшĕн мар, вăл ăна хирĕç хыта кĕрешет. Франци халăхĕ Вьетнамри «ирсĕр вăрçа» чарса лартма тата Хĕвеланăç Германие çĕнĕрен хĕçпăшаллантарассине чарса лартма хытăрах та хытăрах çине тăрса ыйтать. Францин пур патриочĕсем те хăйсен çĕршывне Америка оккупанчĕсен пусмăрĕнчен хăтарасшăн, вĕсем вăрçа хирĕç, миршĕн тăраççĕ.

Франци правительствин çĕнĕ кризисĕ çакна çирĕплетсе парать: парламентри буржуалла деятельсен ирĕксĕрех халăхăн анлă массисем Францири реакцин наци интересĕсене хирĕçле, халăха хирĕçле политикине хытă питленине, çав политикăна хирĕç хытă кĕрешнине шута илме тивет.

Çавăнпа пĕрлех, Фор правительстви агрессиллĕ Атлантика союзĕ совечĕн Лиссабонри сессийĕ хыççăнах отставкăна тухни Америкăри вăрçă пуçарма хĕтĕртекенсен «Атлантика политики» путланса ларнине пĕлтерет. Лиссабонра Фор правительстви вăрçа хатĕрленес тĕлĕшпе çĕнĕ обязательствăсем илнĕ, американецсен вăрçă хатĕрлес политикипе килĕшнĕ, вĕсемшĕн юрăхлă ĕç тунă, анчах вăл çав обязательствăсене пурнăçлама пултарайман. Фор правительствин Франци халăхĕ правительство политикине хирĕç кĕрешесси вăйланса пынă пирки вырăнтан тухмалла пулнă. Çакă США империалисчĕсен Хĕвеланăç Европăри çĕршывсенчи позицийĕсем тĕреклĕ маррине тепĕр хут кăтартса парать. Америка конгресĕн членĕ Смит февралĕн 29-мĕшĕнче: Франци правительствин вырăнтан тухмалла пулчĕ, çавăн пирки Лиссабонра тунă «çитĕнÿсем» пурнăçа кĕрейми «пушă сăмахсем» пулни палăрчĕ, тенĕ.

Францин политикăллă пурнăçĕнчи опычĕ çакна ĕненмелле кăтартса парать: çĕршыври влаçра тăракан ушкăнсем малашне те Америка правителĕсем хушнипе кĕлмĕçлĕхпе вырă политикине пурнăçлама тăрăшни çав политикăпа çĕршывăн нациллĕ интересĕсем хушшинчи хирĕçÿсем татах та хытăрах çивĕчленесси патне илсе пыма пултарать.

Правительство кризисĕ пирки тунă заявленире Франци коммунистсен партийĕ Францири мĕнпур арçынсемпе хĕрарăмсене пĕрлешсе кĕрешме, пур партисен представителĕсене те кĕртнĕ демократиллĕ правительство, Францин мире, республикăна тата нациллĕ никама пăхăнманлăха хÿтĕлекен правительство тăвассишĕн кĕрешме чĕнет.

ВЬЕТНАМ ХАЛĂХĔН ПЫСĂК ÇĔНТЕРĔВĔ

Вьетнам халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çиччĕмĕш çул ĕнтĕ паттăр кĕрешет. Çĕршывăн вунă пайĕнчен тăхăр пайне Франци оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă. Вăрçăра тăшман салтакĕсемпе офицерĕсем пĕтĕмпе 200 пин çынна яхăн пĕтнĕ.

Америка империалисчĕсем Вьетнама хăйсен агрессиллĕ политикин Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири бази вырăнне сыхласа хăварасшăн. Çавăнпа та вĕсем юлашки уйăхсенче Францин Вьетнамри колонизаторĕсене ытларах пулăшса пыма, Вьетнам халăхне хирĕç кĕрешес ĕçре хытă пулăшма тытăннă. «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Вьетнамри корреспонденчĕ Америка Вьетнама çар хатĕрĕсем нумай илсе пыни, французсен çав хĕçпăшала пуштарма васкавлă мерăсем йышăнма тивни çинчен пĕлтерет.

Иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕн вĕççинче Франци влаçĕсем Çурçĕр Вьетнамра, Хоа-Бинь хули патĕнче, Ханой хулинчен 60 километр çурçĕртерехре пысăк тата анлă операцисем пуçарнă. Вĕсем вăрçăра çапăçма 20 пин çынна яхăн кĕртсе янă. Çав çынсене авиаципе артиллери пулăшса тăнă. Хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Çав çапăçусенче оккупантсен пысăк çухатусем тÿсмелле пулнă. 1951 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕпе 1952 çулхи февралĕн 21-мĕшĕ хушшинчи тапхăрта Çурçĕр Вьетнамри фронтсенче кăна Франци салтакĕсемпе офицерĕсене 20.587 çынна вĕлерпĕ, амантнă тата тыткăна илнĕ. Вĕсен тĕреклетнĕ пункчĕсенчен 197-шне аркатса тăкнă е тытса илнĕ. Вĕсен çар техникине нумай пĕтернĕ. Юлашкинчен Францийĕн пысăк йышлă çарĕсене пĕтĕмпе пебех хупăрласа илнĕ. Февралĕн 23-мĕшĕнче Халăх çарĕ Хоа-Бинь хулине йышăннă.

Хоа-Бинь хулине ирĕке кăларни—вăл Халăх çарĕн пысăк çĕнтерĕвĕ. Çавăнпа Халăх çарĕ хăйĕн анăçлă операцийĕсене вĕçлесе çитернĕ. Халăх çарĕ виçĕ уйăх хушшинче темиçе миллион çын пурăнакан территорие тăшманран ирĕке кăларнă. Кунта кăçалхи январь уйăхĕн варринче Франци çарĕн представителĕ «Хоа-Биньшĕн пыракан çапăçусенче хăш енĕ çĕнтернинчен Индо-Китайри пĕтĕм вăрçă мĕнле вĕçленесси килет», тесе калани аса илтерни вырăнлă.

Вьетнам халăхĕн Хоа-Бинь патĕнчи çĕнтерĕвĕн пысăк пĕлтерĕшне реакционерсен хаçачĕсен те ирĕксĕрех йышăнма тивет. Вьетнам халăхĕн çĕнтерĕвĕ «Францийĕн çарĕсем 1951 çулхи ноябрьте пуçланă пысăк тата татăклă наступлени путланса ларнине пĕлтерет, французсем каллех малтанхи позицисенче тăраççĕ, анчах вĕсем халĕ, малтанхипе танлаштарсан, нумай вăйсăрланнă», тесе çырать Англири «Дейли мейл» хаçат.

Демократиллĕ Вьетнам республикипе унăн çарĕ малалла аталанса, вăйланса пырать. Вьетнам халăхĕн мĕнпур вăйĕсем Франци колонизаторĕсемпе Америка империалисчĕсене хирĕç кĕрешме тачăрах пĕрлешеççĕ. Çавна пула ĕнтĕ Вьетнам халăхĕ çĕнĕ çĕнтерÿ тунă.

Н. МОЛЧАНОВ.

Францири правительство кризисĕ пирки

ПАРИЖ, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Паян премьер-министр постне йышăнма килĕшнĕ черетлĕ кандидат Антуэн Пиней Наци пухăвĕнче правительство декларацийĕ çинчен тухса каланă. Пиней—чи реакциллĕ элементсене пĕрлештерсе тăракан «независимăй республиканецсем» текен ушкăнăн членĕ. Пиней ĕлĕкрех Кей, Плевен тата Фор ертсе пынă кабинетсенче министр постне йышăнса тăнă. Петэн туса хунă Наци Совечĕ текенскерĕн членĕ пулса, ĕлĕк Пиней Виши правительствипе çыхăнса тăнă.

Хăйĕн декларацийĕнче Пиней çĕршыв финанс тĕлĕшпе пысăк йывăрлăх тÿснине палăртса хăварнă. Франци банкĕн казначейство умĕнчи парăмĕ пĕрмаях ÿссе пырать. Бюджетри дефицит (расходсем тупăшсенчен ытларах пулни) çĕршер миллиард франк шутланать.

Пиней конституцие тепĕр хут пăхса тухмалла тăвасси çинчен каланă, çакă та Францири ĕççыннисен çĕнтерĕвĕсене пĕтерсе тăкма ĕмĕтленекен реакцие çес кирлĕ. Тулашри политика тĕлĕшпе Пиней малашне те хальхи линие тытса пыма, урăхла каласан хĕçпăшалсене васкасах нумайлатса пыма шутлать, çакă вара Франци Америка империалисчĕсем пуç пулса тăракан агрессиллĕ вăрçă блокне кĕнипе çыхăнса тăрать.

Пиней программине «независимăй республиканецсем» текенскерсем, радикалсем, католиксен МРП («халăхăн республикăшăн кĕрешекен юхăмĕ») партийĕн членĕсем, деголлевецсен пĕр пайĕ тата ытти ушкăнсем те йышăннă. Пиней премьер-министр пулмалли полномочие çирĕплетессишĕн 324 сасă, ăна хирĕç 206 сасă панă. Деголлевецсен РПФ партийĕн руководителĕсем РПФ членĕ пулса тăракан депутатсем сасăлас ĕçе хутшăнмаççĕ тесе пĕлтернĕ. Анчах та тахçанах влаçа тытса илме ĕмĕтленекен çак ушкăнра шалти хирĕçÿсем пуçланса кайнă. РПФ партийĕн нумай депутачĕсем полномочие çирĕплетессишĕн сасăланă.

ТĔНЧЕРИ ÇĔРШЫВСЕН МУСКАВРИ ЭКОНОМИКĂЛЛА КАНАШЛĂВĔ УМĔН

ЛОНДОН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Англире тĕнчери çĕршывсен Мускаври экономикăллă канашлăвне пухма хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлекен комитет хаçат-журналсем валли заявлени пичетлесе кăларнă. Унта, сăмахран, çапла каланă: «Кăçалхи апрелĕн 3-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче Мускавра ун пек ыйту енĕпе историри чи ĕçлĕ канашлу пулса иртмелле. Канашлура çĕршывсем хушшинче суту-илÿ çыхăнăвĕсене аталантарасси çинчен тата тулашри суту-илĕве анлăлатни мĕнле майпа наци производствине ÿстерме тата хаксене йÿнетме пулăшасси çинчен сÿтсе явмалла».

Февралĕн 12-мĕшĕнче Копенгагенра тĕнчери çĕршывсен Мускаври экономикăллă канашлăвне пухас тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм тĕнчери пуçарулла комитет ларăвĕ пулса иртнĕ хыççăн, канашлăва хутшăнма кăмăл тунă ăслăчăйсен шучĕ часах 25 çынна çитнĕ. Вĕсен шутне çĕршыв хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсен представителĕсем кĕреççĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ мартăн 7-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тăшманăн виçĕ истребительне персе ÿкернĕ, çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, Корейăн хĕвелтухăç çыранĕнчи районĕсене тапăннă пулнă.

Вăрçăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине хирĕç

Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕ ООН генеральнăй секретарĕ патне янă çыру

БЕРЛИН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕ ООН генеральнăй секретарĕ патне çыру янă. Çырура çапла каланă:

Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ хĕрарăмсен 64 çĕршыври 135 миллион хĕрарăма пĕрлештерсе тăракан федерацийĕ ячĕпе эпир Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем Корея çарĕсемпе Китай халăх добровольцĕсем тăнă вырăнта тата граждансем мирлĕ халăх пурăнакан тылри вырăнсенче бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине хирĕç çине тăрса, пĕр тăхтаса тăмасăрах тата питĕ хытă протестлени çинчен пĕлтеретпĕр. Çав ирсĕр ĕç тÿрĕ кăмăллă мĕнпур çынсене хытă тарăхтарчĕ, эпир хамăр та çавăн пек тарăхни çинчен калаcа паратпăр.

Пĕрлешÿллĕ Штатсем, пĕтĕм этемлĕх йышăннă йĕркесене хирĕç пырса тата вăрçăри йĕрке пирки тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕрин хушшинче тунă мĕнпур палăллă килĕшÿсене пăсса, бактериллĕ хĕçпăшалпа малтанхи хут кăна мар усă кураççĕ. «Нью-Йорк таймс» хаçатра 1951 çулхи майăн 9-мĕшĕнче пичетленнĕ хыпартан çакă палăрĕ: Корея Халăх правительстви Макартурпа Риджуэй генералсене Корейăри вăрçăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнăшăн çар преступникĕсем тесе шутласа суда пама требовани лартнă.

Хăвăрт сарăлакан ерекен чирсене пĕтерес тĕлĕшпе ученăйсен нумай ĕрăвĕсем пĕтĕм пĕлĕвĕсене парса ĕçленĕ. Холера, чечче чирĕнчен тата ытти вĕлерекен чирсенчен миллионшар çынсем вилсе пĕтнĕ.

Анчах халĕ, Япони çар преступникĕсемпе пĕрле килĕштерсе ĕçлесе нумай вăхăт хушши хатĕрленнĕ хыççăн, Пĕрлешÿллĕ Штатсем 16 йышши бактериллĕ хĕçпăшалпа усă кураççĕ. Бактериллĕ хĕçпăшала вĕсем хăйсен этемлĕхе хирĕçле тискер ĕçĕсен программине—«пĕтĕмпех пĕтерсе тăкмалли интервенци тăвас» программăна—пурнăçлас, Корейăн пĕтĕм халăхне пĕтерсе тăкма тата çĕршывран пушхир туса хурас шутпа усă кураççĕ.

Америка çарĕсем бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнă чухне шăнасем, эрешменсем, кăткăсем, москитсем тата ытти хурт-кăпшанкăсем пăрахнине, савсемпе усă курнине нумай фактсем çирĕплетсе кăтартаççĕ. Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине пĕр тăхтаса тăмасăрах йĕрлесе тĕпчес пулать, унпа усă курма чармалла, çавăн пек тумасан, ООН мире юратакан тÿрĕ кăмăллă мĕнпур çынсем шанса тăнине пурнăçламанни, вĕсене улталани пулать.

Бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курни пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсене, хытă шиклентерет. Хăвăрт сарăлакан чир-чĕрсем пурне те хăрушă. Бактериллĕ вăрçă пĕтĕм этемлĕхшĕн хăрушлăх туса хума пултарать. Бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курса вăрçни питĕ ирсĕр тата этемлĕхе хирĕç тунă тискер ĕç пулса тăрать. Нюрнбергри процесра Гитлер газ камерисемпе усă курнине сивленĕ пулсан, бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курни унтан та тискертерех ĕç пулса тăрать.

Цивилизациллĕ этемлĕхĕн прависене хÿтĕлесе тăрас ответлăха Сирĕн çине хунă. Çавăнпа та, хăйсене хÿтĕлеймен çынсене хирĕç кашни кун тискер ĕçсем тунă вăхăтра, сирĕн нимĕн шарламасăр тăмалла мар.

Эпир сирĕнтен халех çав ĕçе йĕрлесе тĕпчеме, çав тискер ĕçе чарса лартма ыйтатпăр.

Çыру çине Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕн генеральнăй секретарĕ Мари-Клод Вайян-Кутюрье алă пуснă.

БОЛГАРИН МИРЕ СЫХЛАСА ХĂВАРАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОМИТЕЧĔН ПРОТЕСЧĔ

СОФИЯ, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарин мире сыхласа хăварас тĕлĕшпе ĕçлекен комитечĕ ООН секретариатне телеграмма янă.

Телеграммăра çапла каланă: Болгарири мире хÿтĕлессишĕн кĕрешекен миллионшар çын ячĕпе Болгарин мире сыхласа хăварас тĕлĕшпе ĕçлекен комитечĕ американецсем Корейăн асап куракан халăхне вĕлерсе пĕтерме çĕнĕ тискер ĕçсем тума тытăннине хирĕç питĕ хытă протестлет, ООН-ран Корейăри тискер вăрçа чарса лартма тата Корея арçынĕсене, хĕрарăмĕсене, ачисене вĕлерекенсене халех суда парса айăпламашкăн пĕр тăхтаса тăмасăрах татăклă мерăсем йышăнма çине тăрса ыйтать.

1952 çулхи март, апрель тата май уйăхĕсенче лекцисем, докладсем тата калаçусем ирттермелли ТЕМАТИКА

I.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли 1951 çулхи государство планне тултарни тата хуçалăхпа культура строительстви тĕлĕшпе умра тăракан задачăсем.

Майăн 1-мĕшĕ—ĕççыннисен пĕтĕм тĕнчери уявĕ.

Майăн 9-мĕшĕ—совет халăхĕ гитлерла Германие çĕнтернĕ уяв.

Коммунизмăн аслă стройкисем.

СССР государство бюджечĕ,— совет халăхĕн социализмлă экономикипе культурине малалла вăйлатмалли бюджет.

СССР государство заемĕсем.

Совет Союзĕ пĕтĕм тĕнчери миршĕн пыракан кĕрешÿре.

США империалисчĕсем—пĕтĕм тĕнчери халăхсен усал тăшманĕсем.

II.

Чăваш АССР ялхуçалăхне аталантармалли 1952 çулхи план тата çуракине хатĕрленсе ирттермелли задачăсем.

Чăваш АССР-ĕнчи колхозникĕсемпе колхозницăсем, МТС работникĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем Сталин юлташ патне янă çыру.

Çуракине кăтартуллă хатĕрленсе ирттерессишĕн колхозсем, совхозсем тата МТС-сем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăрах сарар.

Ялхуçалăх артелĕн уставĕ—колхоз пурнăçĕн тĕп законĕ.

Ĕç кунĕсемпе туллин усă курни—кашни колхоз хуçалăх ĕçĕнче çитĕнÿ тумалли никĕс.

Колхозăн производствăллă планĕ.

Социализмлă ялхуçалăхне аталантарас ĕçре МТС тĕп вырăн йышăнса тăрать.

Лайăх вăрлăх — вăйлă тырпул никĕсĕ.

Тракторсене, комбайнсене, ялхуçалăх машинисене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа юсаса çитерер.

Колхоз уй-хирне вырăнти удобренисемпе минераллă удобренисем ытларах кăларар.

Тарăн сухалани—ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстермелли пысăк майсенчен пĕри.

Малта пыракан мичуринла наука çитĕнĕвĕсене ĕçе кĕртни—социализмлă ялхуçалăхне малалла аталантармалли çул.

Çуракине кĕске срокра тата агротехника тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра ирттерер.

Кĕр калчисене çуркунне пăхасси.

Халăх хуçалăхне техникăллă культурăсем ытларах парар.

Выльăх апачĕ акмалли плана кашни колхозăн тултармалла.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçпе выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе тăракан задачăсем.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче çамрăк выльăхсене пăхса ÿстерес ĕçе тĕрĕс организацилер.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçе тĕрĕс организацилени тата ĕçшĕн тĕрĕс тÿлени—обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ÿстерме кирлĕ услови.

III.

Чăваш АССР промышленноçне 1952 çулта малалла аталантармалли задачăсем.

1952 çулхи строительство планне тултарассишĕн строительсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлă сарар.

Промышленность продукцийĕн хăйне ларакан хакне йÿнетмелли майсем.

Промышленность работникĕсем хушшинче продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн пыракан социализмлă ăмăрту.

Вăрман хатĕрлесе турттарса кăларас тĕлĕшпе Сталин юлташ патне янă çырура йышăннă обязательствăсене срокчен пурнăçлар.

Производство новаторĕсен çитĕнĕвĕсене—масса хушшине.

ВКП(б) ОБКОМĔН ПРОПАГАНДĂПА АГИТАЦИ ПАЙĔ.

Государство пулăшăвĕ

Нумай ачаллă амăшĕсемпе вăрçă инвалидĕсене тата ватăлса ĕçлеймин пулнă çынсене те государство пысăк пулăшу парса тăрать.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Карăкçырми Ял Советĕнчи нумай ачаллă хĕрарăмсем кашни уйăхрах 1.690 тенкĕ пулăшу илсе тăраççĕ. Унсăр пуçне, ача çуралнă хыççăн та хĕрарăмсене пĕр вăхăтлăх пулăшу параççĕ. Акă, иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче кăна, М. Кузьмина колхозница, виллĕкмĕшпе улттăмĕш ачасене çуратнăшăн пĕр харăсах 1.850 тенкĕ пулăшу илчĕ. Çавăн пекех Е. Михеева, Р. Голицына колхозницăсем те 800-шер тенкĕ укçа илнĕ. Кун пек тĕслĕхсем ял Советĕнче сахал мар. Çапла вара, нумай ачаллă хĕрарăмсене пĕлтĕр государство мĕн пурĕ 20.250 тенкĕ парса пулăшнă.

Çакăнпа пĕрлех государство вăрçă инвалидĕсемпе ĕçлейми пулнă ватăсене те çулсеренех тĕрлĕ çăмăллăхсем парать. Ял Советĕнчи вăрçă инвалидĕсемпе ĕçлейми пулнă ватăсем кашни уйăхрах 2.900 тенкĕ илсе тăраççĕ.

Хăйсене пулăшса тăнăшăн, ача амăшĕсемпе вăрçă инвалидĕсем большевиксен партийĕпе халăхсен аслă çулпуçне Сталин юлташа чĕререн тав тăваççĕ.

П. ГОЛИЦЫН.

Атăл çинчи портсемпе çыхăну тытма

Атăлпа Дон хушшинчи суднăсем çÿремелли канала ĕçе янă хыççăн, çак икĕ шыв çинчи портсем хушшинче телефонпа телеграф çыхăнăвĕсем нумай вăйланаççĕ.

Ку таранччен Шупашкарти пристань Горький тата Куйбышев хулисем хушшинчи пристаньсемпе çеç телефонпа тата телеграфпа çыхăну тытса тăнă. Атăлпа Дон хушшинчи канал ĕçлеме тытăнсан, Шупашкар пристанĕ Мускав, Щербаков, Астрахань, Молотов, Уфа, Дон çинчи Ростов порчĕсемпе тата вĕсем хушшинчи ытти пристаньсемпе те, çавăн пекех канал хĕрринчи кашни портпа телефон тата телеграф урлă çыхăну тытакан пулать. Вĕсемпе çыхăну тытма Шупашкарти пристаньре халĕ хăватлă коммутаторсем вырнаçтарса лартнă.

Çĕнĕ йышши аппаратсемпе ĕçлеме пултаруллă кадрсем—телефонистсемпе телеграфистсем кирлĕ. Çавна май, пристаньре коммутаторсемпе ĕçлекен специалистсен курсне организациленĕ. Занятисене çыхăну дистанцийĕн начальникĕ Вислогузов юлташ, дистанци инженерĕ Федоров юлташ, техник Дмитриев юлташ ирттереççĕ.

Тăлăх ачасене пулăшаççĕ

КАНАШ. Уçырмари çичĕ çул вĕренмелли шкулта Аслă Отечественнăй вăрçăра вилнисен ачисене тата тăлăх ачасене куллен пулăшса тăраççĕ.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче «Комбайн» колхоз тăлăх ачасене пулăшма 3.000 тенкĕ яхăн укçа уйăрнă.

Ответлă редактор заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, мартăн 9-мĕшĕнче, кăнтăрла вырăсла спектакль
„ЖЕНИТЬБА“
каçхине—чăвашла спектакль
„Пурнăçа юратса“
(Юлиус Фучик)

Ыран, мартăн 10-мĕшĕнче, каçхине чăвашла спектакль
„Я л т а“

Мартăн 11-мĕшĕнче, каçхине вырăсла спектакль
„Три сестры“

Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхинехи 20 сехетре пуçланать.

„Родина“ кинотеатрта

Паян, мартăн 9-мĕшĕнче, Китайра кăларнă çĕнĕ илемлĕ фильм
„Сын степей“

Мартăн 10-мĕшĕнчен пуçласа çĕнĕ илемлĕ фильм
„Пржевальский“
кăтартма тытăнаççĕ.

Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

К ĕ с к е н

СОВЕТСКИ. Буденный ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта пурçăн хурчĕ ĕрчетме тытăнчĕ. Вăл тĕлĕшпе ятарласа тунă бригада ĕçлерĕ, ăна И. Потапов колхозник ертсе пырать.

Пурçăн хурчĕ ĕрчетсе колхоз малтанхи çулах темиçе пин тенкĕ тупăш илчĕ.

ЕТĔРНЕ. Район центрĕнче обществăллă çуртсем çулсеренех нумайланса пыраççĕ. Иртнĕ çулта хулара перекет кассин, ялхуçалăх таварĕсем сутмалли магазин, çул-йĕр участокĕн, электростанци çуртĕсене туса лартнă.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00351 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.